**Пĕчĕк ялта çынсем курак пек пурăнаççĕ: çуркунне вĕçсе килеççĕ, кĕркунне каяççĕ… • 4 стр.**

*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр… Эсир пуртан кил-çуртăм ăша*

ХЫПАР

1997 çулхи кăрлачăн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

# Чăваш хĕрарăмĕ

28 (846) №, 2014, утă, 12

Хакĕ ирĕклĕ.

16+

Хаçата электрон адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.

**Шкула ăшăтмашкăн 15 кăмака хутнă.** 2 стр.

**Ача ӳстерме укçа кăна мар, чăтăмлăх та кирлĕ.** 3 стр.

**Упăшкине вилĕмрен çăлас тесе хĕрарăм… йĕплĕ пралук леш енне çакланнă.** 5 стр.

**Тарласан, ура тăртансан…** 8 стр.

**Яш чух – аллă…** 9 стр.

**Ачишĕн çунса кăмрăкланать амăшĕн чĕри.** 10 стр.

**Уçлăх паттăрĕ çинчен мăшăрĕ пĕр интервью та памасть. Мĕншĕн?** 11 стр.




2 стр.

# Аякри Петровкăра

**Кĕçĕн Таяпаран 4 çухрăмра вырнаçнă Петровкăра, пурĕ 11 хуçалăх, вĕсенчен 8-че çеç пурăнаççĕ паян. Хĕл каçма яла пиллĕкĕн çеç тăрса юлаççĕ, ыттисем ывăл-хĕрĕ патне хулана куçса каяççĕ. Малтан 25 кил пулнă ялта халĕ 80-90 çулсенчи ватă çынсем кăна. 90-мĕш çулсенчи çĕнетӳ тапхăрĕнче пушанса юлнă ку тăрăх…**

## Нимере

Эпир килнĕ кун кинемейсем пурте урамраччĕ. 90 çулти Наçтаç аппана ывăлĕ вутă татса панă та ялĕпех шаршан купалама тухнă. Куçса кайнă хыççăн пĕрисен кивĕ пӳртĕнчен хăмасемпе пĕренесем çеç тăрса юлнă, ахаль йăваланса выртиччен ăна вутта ярас тенĕ. Таяпа Энтринче пурăнакан хĕрĕсем, Марияпа Зина та, амăшне пулăшма çитнĕ. Хĕрĕ Вера çывăх çыннине курма Свердловскранах килнĕ. Наçтаç аппа вĕсемшĕн тем пекех хĕпĕртет. «Ман хĕрĕмсем те ватăлчĕç ĕнтĕ, чи асли çитмĕлте», – тет шӳтлерех хăй. Сиссе те юлаймарăмăр, эпир калаçкаласа тăнă хушăра ăш пиллĕ асаннесемпе кукамайсем çерем çинчи вутă сыпписене купаласа та хучĕç. Çамрăк мар ĕнтĕ, ал-ури те сурать, вăйĕ те хавшать пуль, çук, ĕçсĕр лараймаççĕ вĕсем. Уттине те пĕрлех купалаççĕ, пахчине те çумлаççĕ, милĕк те çыхаççĕ... Тăвансем пек килĕштерсе пурăнакансем яланах пĕр-пĕрне пулăшма васкаççĕ, мĕн пур ĕçе пĕрле тăваççĕ. Çапла вĕсем – Елчĕксем. Туслăха малти вырăна хума, йывăр чухне вăхăтра алă пама, хуйхă-суйхăпа савăнăçа пĕрле пайлама пĕлеççĕ вĕсем. Кăçалхи ака уйăхĕнче 90 çул тултарнă Анастасия Ефимовна ывăлĕпе пурăнать. 7 ача çуратса ӳстернĕскер халĕ те çирĕп-ха. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче Улатăрта окоп чавнă, хĕн-хурне пайтах курнă. Нихăçан та ĕç тиркесе тăман, ачисене тăрантарас, çынран катăк çӳретес мар тесе бригадăра, колхозра, почтăра та тăрăшнă мăнтарăн. Упăшки Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинчен чиперех таврăннă, анчах та сурансене пула унăн ĕмĕрĕ маларах татăлнă.

Амăшĕ патне килсе кун каça темĕн тума та ĕлкĕрекен Наçтаç аппан хĕрĕсем чей ĕçтермесĕр кăларса ямарĕç пире, пĕчĕк яла татах та килсе курма ыйтрĕç. Петровкăра тĕпленнĕ Зоя Семенова, Анастасия Сайкина та чунне уçсах калаçрĕç.

*Шалча çапса этем çулне картлаймăн.* Каларăш.

ÇАНТАЛĂК



| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 12.07 | +21 | +16 |
| 13.07 | +25 | +15 |
| 14.07 | +26 | +15 |
| 15.07 | +28 | +19 |
| 16.07 | +26 | +17 |
| 17.07 | +22 | +10 |
| 18.07 | +18 | + 9 |



ПУРĂНАТПĂР-ХА

# Аякри Петровкăра



/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.

### Беляевсем патĕнче

Мария Аристарховна Беляева 84 çулта. Вăл ĕмĕр тăршшĕпех çул-йĕр çинче ĕçленĕ. Ку яла Аслă Таяпаран качча килнĕ. Ашшĕ-амăшĕ пуян пулнă унăн. Çывăх çыннисем ĕмĕр-ĕмĕр тулăх пурăнма пил парса хĕр туприпе пĕрле вĕллесем парса янă. Пĕчĕкрен ĕçпе пиçĕхсе ӳснĕ Марье лайăх пăхнă вĕсене. Çав йăх халĕ те пурăнать. Хурт-хăмăр тытакансем шутне калама юратмаççĕ те, мĕн чухлĕ иккенне асăнмăпăр, сахал марччĕ, пахча тулли-ехчĕ. Çурла уйăхĕнче пире çĕнĕ пыл çиме килме ыйтрĕç. Мускавран пĕчĕк хĕрĕпе амăшĕ патне канма килнĕ Оля çĕр çырлипе хăналарĕ. Амăшне пирĕн хăçата тепĕр çур çуллăха çырăнтарса пама шантарчĕ. Хăйĕн тăван ялне питĕ юратать вăл. Петровкăра тата чылай-чылай çул вучах сӳнмессе шанать. Тăван килçуртне Настаç аппан ывăлхĕрĕ нихăçан та саланма памĕ. Беляевсем пахчара пыл хурчĕсем валли ятарласа фацели ӳстереççĕ. Халь вăл шăпах чечекре пулнă май хуртсем пахчана иленнĕччĕ.

Настаç аппан пыл хурчĕсемпе халĕ ытларах хуларан килнĕ хĕрĕ Антонина ĕçлет. Çуркунне килет те пĕрремĕш юр ӳксен кăна хулана таврăнать.

### Икĕ хусах

Петровкăра кинемейсем çеç мар, икĕ хусах пурăнать тата. Вĕсем Тутарстанри Пăва тăрăхне ĕçлеме çӳреççĕ. Акана, тыр-пул пуçтарса кĕртме, утă çулма... «Укçине те илсе килетпĕр, тыррине те параççĕ», – терĕç кăмăллăн. Ĕçе кайман чухне ялта ватăсене пулăшаççĕ. 32 çулти Алексей Серафимов амăшĕпе пурăнать. Каччă çемье çавăрас шухăшлă. Пĕчченлĕх ывăнтарса çитернĕ ăна. Шел те, хĕрĕсем çук ялта. Таврарисем те качча кайса пĕтнĕмĕн. Тутарстанран илсе килсен кăна ĕнтĕ...

### Ĕмĕтленни пурнăçлантăрах

Петровкăна çитиех асфальт çул килет. Таса, уçă сывлăш кунта. Тусан çук, шăплăх хуçаланать. Эрнере пĕрре автолавкка та килсе тăрать, çăкăрпа, кирлĕ таварпа тивĕçтерет. Çуллахи вăхăтра ачасемпе канма аван ку ялта. Газ çукки пирки кăна пăшăрханаççĕ ватăсем. Ку тăрăхра кăвак çулăм кĕртнĕ чухне кинемейсене кирлĕ пулман вăл. «Халĕччен унсăрах пурăннă-çке, малашне те хĕл каçăпăр-ха», – тенĕ. Хăшĕпĕри ун чухнех хулана каяс шухăшлă пулнă. Халĕ газ кĕртме документаци хатĕрлесе çитернĕ ĕнтĕ. Апла ĕмĕтленни пурнăçланатех пуль-ха.

Пĕчĕк ял илемĕпе тыткăнларĕ. Çӳллĕ хурăнсемпе тирексемлĕ, пылпа çăка çеçки шăршиллĕ Петровкăра тĕрлĕ кайăк каçăхса кайса юрланипе пĕрлех пĕр чарăнми куккук авăтрĕ. Ахăртнех, кунти ырă та уçă кăмăллă кинемейсене тата-тата нумай пурăнма вăрăм ĕмĕр сунчĕ.

**Елена АТАМАНОВА.**
Елчĕк районĕ.
Автор сăн ӳкерчĕкĕ.

ТĔСЛĔХ ШАЙĔНЧЕ

# Ачасем çитĕнни те сисĕнмест

**Вăрнар районĕнчи Авшак Элмен ялĕнчи Алексеевсем ĕç алă çумне çыпăçманнине никамран лайăх пĕлеççĕ. Миллионер «Гвардеец» хуçалăх салансан та çухалса кайман вĕсем. 10 гектар çĕр лаптăкĕнче ĕçлеме техника туяннă. Çакăнта тыр-пул, çĕр улми çитĕнтереççĕ. Выльăх-чĕрлĕх йышне пысăклатнă. Халĕ Иван Юрьевичпа Надежда Федоровнăн килĕнче – 4 ĕне, 6 пăру, вăкăр, лашапа тиха. Ытти çул сурăх та йышлă тытнă.**



Килĕштерсе пурăнакан мăшăр – пĕр тăрăхранах. Апла пулин те пĕве кĕриччен хĕрпе каччă пĕр-пĕрне палламан. Йĕтем çинче йывăр михĕсем йăтакан Надежда Иван тӳрех куç хывнă. «Эсĕ манăн пулăн», – пурнăç çыннине вĕçертес темен çамрăк.

Алиса, Ильзита, Кристина ашшĕ-амăшĕ пекех ларатăра пĕлмеççĕ. Кил таврашĕнче те, хирте те ывăннине туймасăр ĕçлеççĕ вĕсем. Çав вăхăтрах аппăшĕсем шăллĕне куçран вĕçертмеççĕ.

Алексеевсем 3 хĕр çуратнă хыççăн ывăл кĕтнĕ. «Çие юлсан тĕлĕк те тĕлленчĕ. Картана хура вăкăр хупрăмăр пек», – каласа кăтартать хĕрарăм. Çут тĕнчене арçын ача килни ашшĕпе амăшне мĕнешкел хăпартлантарнă. «Çĕр çинче манран телейлĕрех хĕрарăм та çук», – çирĕплетет çемье ăшшине упракан. Артем – ялта пĕртен-пĕр ят. Çулталăк та тăхăр уйăха çитнĕскер хăйне чăн арçын пек тытать: сăлтавсăр кутăнлашмасть, макăрмасть. Мана, инçетрен килнĕскерне, тӳрех канфет тыттарчĕ. Кучченеçе илнĕшĕн чунран савăннине алă çупса палăртрĕ вăл.

Алексеевсем мăян çитĕнекен вырăнта хăтлă йăва çавăрнă. 2 кун çурăра çурт хăпартса лартнă. 67 çын нимене килнĕ. Халĕ кунта йĕри-тавра – чечек. Икĕ хутлă керменте кашни пепкен – уйрăм пӳлĕм. Стена çинчи Хисеп хучĕсемпе медальсем чуна ăшăтаççĕ. Иван Юрьевичпа Надежда Федоровнăн хĕрĕсем спорта та, вĕренӳре те маттур.

«Ачасем çитĕннине те сиссе юлаймарăм», – пытармасть Надежда Федоровна. Асли кăçал шкул пĕтернĕ.

Пахчари çырла лаптăкне пысăклатсах пыраççĕ вĕсем. Çулсерен пан улми, груша лартаççĕ. Арпуспа дыня, иçĕм çырли те туянмалла мар – йăлтах алă айĕнче.

Кил хуçи хăйне бригада пуçтарса çурçĕре тухса каять. Унта вĕсем ача сачĕсем, уйрăм çуртсем хăпартаççĕ. Тарпа йĕпенмĕ укçа, паллах, ĕмĕт-тĕллеве пурнăça кĕртме пулăшать. Алексеевсем картишне плитка сарасшăн. Утă-улăма рулона пуçтармалли агрегат та кирлĕ.

«Хăш чухне ачасем çывăрса тăриччен Вăрнара аш турттарма кайса килетпĕр. Кайран пурте пĕрле шашлăк пĕçеретпĕр», – калаçăва тăсать мăшăр. Унсăр пуçне Алексеевсем çемйипех Çавал хĕрринче канаççĕ. Çуралнă тăрăхран хаклăрах вырăн та çук вĕсемшĕн.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**
Автор сăн ӳкерчĕкĕ.

ИРТНИ КИЛЕТ АСА

# Тирпейлĕçĕсĕр шкул хăтлă мар

Уявсенче Шĕмшеш чиркĕвне кĕлле çӳрекен яланах йышлă. Пĕр кунхине манăн та унта кайма тӳр килнĕччĕ. Картишĕнче чылайранпа курман пĕлĕш кинемее асăрхарăм, сăмах чĕнтĕм. 40 çул каялла Нина Порфирьевна Сурăмпуç Шĕмшешри шкулта ĕçлетчĕ.

70-мĕш çулсен пуçламăшĕнче манăн çав шкула ертсе пыма тӳр килчĕ. Тĕп çуртра 5 класчĕ, хĕвел анăç енчи коридора пӳлсе директор пӳлĕмĕ тутартăм. Кĕçĕннисене валли уйрăм икĕ çурт пурччĕ. Апат пĕçермелли, шыв вĕретмелли лаç, унпа юнашарах мастерскойпа библиотека вырнаçнăччĕ. Учительсен общежитийĕнче Канашри Николай Петров, Павлушкăньри Валериан Николаев, Ураскилтри Гурий Терентьев пурăнатчĕç, тепĕр пӳлĕмре – Тури Вылăри Нина Ермаковăпа Кураккассинчи Тамара Ильина. Пурĕ 15 кăмака хутма тиветчĕ. Директорăн тивĕçĕ – хĕл каçмашкăн шкула вутăпа тивĕçтересси, унсăр пуçне 13 учитель килне 7-шер кубла метр çитермелле. Малтанхи çул ку тĕллеве пурнăçламашкăн йывăрччĕ. Халăха ĕçлетерме те пĕлмелле, техника тупасси уйрăмах чăрмавлăччĕ.

1972 çул асăмрах. Шăрăх çу тăрать. Вăрмана кĕме чарнăран Муркаш районĕнчи Ильинка патĕнчи Атăл çыранне вутта кайрăмăр. Пĕрenесене шыв тăрăх сулăпа юхтарса килетчĕç те моторлă пăчкăпа сыпăкăн-сыпăкăн татса паратчĕç. Эпир те ыттисемпе ăмăртсах пĕренесене çекĕлпе çаклататтăр та машинăна хуратпăр. Хĕл каçмашкăн шкула сахалтан та 200 кубла метр вутă кирлĕ. Шоферпа иксĕмĕрĕн час-часах тиевçĕ пулма тӳр килнĕ.

Нина Порфирьевна манăн вырăна вутта сахал мар кайнă. Вăл 3 тирпейлĕçĕрен чи çамрăккиччĕ, Ишпарайккăран çӳретчĕ, Мария Андреевăпа Александар Егорова – Сурăмпуç Шĕмшешрен. Ĕçĕ хĕрарăмсен çав тери нумайччĕ. Ирхи сакăр сехет тĕлне 13 кăмака хутса кăлармаллачĕ: кăвар сӳнтермелле, сĕрĕмне кăлармалла... Кунне икĕ хутчен классене çуса тухмалла, шкул картишне тирпейлемелле. Вутта татса çурма та вĕсенех тивнĕ. Çĕрле черетпе шкула хураллатчĕç. Директорта ĕçленĕ вăхăтра вĕсен ĕçĕпе яланах кăмăллăччĕ эпĕ.

Кайран хуçалăх енĕпе ĕçлемешкĕн Сурăмпуç Шĕмшешри Анатолий Афанасьева йышăнтăмăр, повара – Ишпарайккăри Александра Егоровăна. Çак штатсене уçма май килсен шкул ĕçĕхĕлне йĕркелесси чылай çăмăлланчĕ.

Нина Порфирьевна 87-е çитрĕ, хăйне çирĕп тытать, уявсенче чиркĕве çӳрет. Çемьеленсе пурăнма тӳр килменнишĕн ӳкĕнмест кинемей. Шăллĕн ачисем ăна пĕчченлĕхе туйма памаççĕ. Нина Порфирьевна йывăр вăхăтра ӳснĕ. Çие тăхăнмалли пулманранах шкултан пăрахма тивнĕ унăн, çамрăклах колхоз ĕçĕсене çӳренĕ вăл. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче хĕре бригадира суйланă. Хăйĕн кун-çулне вăл çапах та шкулпа çыхăнтарнă, 41 çул унта ĕçлесе ирттернĕ.

Сурăмпуç Шĕмшешре часчасах пулма тăрăшатăп. Шкулăн хальхи сăн-сăпачĕ хурлантарать. 2003 çултанпа кунта ача-пăча сасси илтĕнмест, çурт çулсеренех ишĕлсе пырать. Çапах та ĕлĕкхи шкул район энциклопедийĕн I кĕнекине кĕрсе юлчĕ, çапла вара вăхăт иртсен те унăн историйĕ манăçа тухмĕ.

Манăн вара пĕр вăхăтра ĕçленĕ тирпейлĕçĕсене паян та тав тăвас килет...

**Владимир ЕГОРОВ.**
Элĕк районĕ.

САМАХ ПАРĂР-ХА

# Вăй, чăтăмлăх тата нухрат кирлĕ

Елена АТАМАНОВА

**Урампа ик-виç ача е ытларах та çавăтса утакан амăшĕсене курсан чун савăнать. Кун пек ўкерчĕке юлашки вăхăтра хулара та асăрхама пулать. Темиçе çул каялла çеç-ха пĕр ача çуратнипех çырлахатчĕç.**

**2008 çултан тытăнса çуратакансем хырăм пăрахакансенчен те нумайрах пулнине палăртаççĕ шур халатлисем. Абортсен шучĕ Чăваш Енре икĕ çул хушшинче 31,2 процент чакнă /пĕтĕмĕшле шучĕ 2 пине яхăн/.**

**Йыш хушăнни пуласлăхпа çыхăннă. Çемьене «çĕнĕ кайăк» килни мĕн тери пысăк телей. Патшалăх та çамрăксене ал-ура çавăрса яма пулăшать. Çавăнпах-и, тен, юлашки вăхăтра хăрамасăрах çуратма тытăнчĕç. Иккĕмĕш е ун хыççăнхи пепкешĕн тивĕçекен амăшĕн капиталĕ нумайăшĕн ĕмĕтне пурнăçа кĕртме май парать. Чылайăшĕ çак укçапа хваттер туянать, çурт лартать, банк кредитне тўлесе татать, вĕренўшĕн саплаштарать. 7 çул хушшинче 250 пинрен 429,4 пин тенке çитрĕ çав укçа. Виççĕмĕшне çуратакансене республикăра çĕр пама тытăннине те ырламалла. Нумай ачаллисене çурт лартса пани те савăнтарать. Республикăра çав пулăшупа усă куракансем йышлансах пыраççĕ. Вĕсем пирки хаçатра чылай çырса кăтартрăмăр.**

**Ача сачĕн черечĕ пирки те сăмах хускатас килет. Ку енĕпе юлашки çулсенче лару-тăру чылай лайăхланчĕ. Маларах мар-тăк, ача 3 çула çитнĕ çĕре садикпе тивĕçтерес-çех.**

**2011 çултан тытăнса ЧР Министрсен Кабинечĕ садике çўреймен 1,5-3 çулсенчи ачасем ўстерекен сахал тупăшлă çемьесене пособи тўлессине ырлани те аван. Пилот проект çав çулхи ака уйăхĕнче ĕçлеме пуçларĕ. Анчах та малтан палăртнă пекех пулаймарĕ. Хыснара укçа çителĕксĕррине кура-ши, 3 çулчен мар, ача 2 çула çитиччен çеç тўлеме тытăнчĕç. Çак укçа – садикри пĕр ачашăн патшалăх уйăракан виçе. Шел те, ăна пурте тивĕçеймеççĕ. Шупашкар хулипе районĕнче, Канаш хулинче çеç йышăннă пособи тўлеме. Ку вырăнсенче садик черетне тăнисем йышлăн. Вăхăт иртнĕçемĕн çăмăллăхпа республикăри кашни хулара-районти ачаллă çемье усă курма пуçласса шанас килет.**

**Çемье ача сачĕсем усма майсем туса пани те аван. Ку та лару-тăрăва çăмăллатать. Йĕрке тăрăх, çемье ача сачĕ 2 уйăхран пуçласа 7 çула çитиччен виçĕ е ытларах пепкене пĕрлештерет. Нумай пулмасть Çĕнĕ Шупашкарта пурăнакан 13 ачаллă Хрулевсем патĕнче пулса курнăччĕ. Вĕсем уйрăм харпăрлăхри ача сачĕ йĕркеленĕ. Унта Софьйăпа Настя тата Андрей çўреççĕ. Амăшĕ Светлана Васильевна – воспитательница. Вăл уйăхсерен пĕр штат шалăвне илсе тăрать. Апатне кашни кунах ача садне кайса илет. Садикшăн ыттисем пекех тўлеççĕ.**

**Хрулевсен аслисем çитĕнсе ура çине тăнă ĕнтĕ. Çемьеленме ĕлкĕрни те пур. «Пўрт тулли ача-пăча пулнине хăнăхнă эпĕ. Вĕсене пăхассинчен хăрамастăп. Сывлăх пулсан ура çине тăратăпăр-ха. Пысăк çемье ĕçре те, сĕтел хушшинче те илемлĕ», – терĕ ăш пиллĕ амăшĕ. 13 ача амăшĕн куçĕнче сăпайлăх, ăшăлăх, юрату, сăн-питĕнче иксĕлми илем тапса тăрать. Сак тулли ача-пăча пулнишĕн савăнать кăна мăшăр. Тĕпренчĕкĕсене тĕрĕс-тĕкел пăхса çитĕнтерме тăрăшаççĕ ашшĕпе амăшĕ. Хрулевсем кермен пек çурт лартнă ялта. Хитре, ыттисемшĕн тĕслĕх пулса пурăнма пĕлеççĕ вĕсем. Çĕнĕ Шупашкарта икĕ хваттер туяннă. Ыррине шанса, çутă пуласлăх пирки ĕмĕтленсе малалла утаççĕ Хрулевсем. Ачисене çынна юрăхлă, тĕрĕс-тĕкел çитĕнтерсе пурнăçăн аслă çулĕ çине кăларасшăн.**

**Çапах та пепкене ура çине тăратма мĕн чухлĕ вăй, чăтăмлăх, нухрат кирлине ача-пăча çитĕнтерекен ашшĕ-амăшĕ кăна пĕлет. Тăкакланмасăр пĕр кун та иртмест. Ача япалин хакĕ мăн çыннăннипе пĕрешкелех. Пепке хăвăрт çитĕннине кура тумтире çĕнетсех тăмалла. Тетте те, аталантаракан тĕрлĕ литература та кирлĕ. Шăпăрлана тĕрлĕ секци-кружока, студие те çўретес килет ашшĕ-амăшĕн.**

**Пепке çут тĕнчене килсенех пĕр хутчен паракан укça 13 пин те 741 тенкĕпе танлашать паян. Ача çулталăк çурăна çитиччен пĕрремĕш ачашăн уйăхсерен 2,6 пин тенкĕ, иккĕмĕшĕшĕн тата ыттисемшĕн 5,2 пин тенкĕ тўлеççĕ. Унсăр пуçне тĕпренчĕк 18 çул тултариччен çемье тупăшне, йышне кура ача пособийĕ илме май пур. Анчах çак виçепе чылай ашшĕ-амăшĕ кăмăлсăр. Вăл пирĕн çĕр-шывра нихăçан та пысăк пулса курман. Утă уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пособие пăртак ўстерчĕ. Çемьери пĕр пепкешĕн уйăхсерен тивĕçекен висене 164 тенке çитерчĕ. Енчен те икĕ ача тăк – кашни ача пуçне 206 тенкĕ. Пепке çитĕнсе пынă май нухрачĕ тата ытларах кирлĕ те вĕт. Уйăхсерен тивĕçекен çак укçа мĕн тума çитет-ши? Пĕрре лавккана кĕрсе тухмалăх та çук-çке. Ку пособи те хăçан та пулсан ўсессе кашни çемье тем пекех кĕтет.**

АСĂРХĂР!

# Чĕр чун вилсен те ĕçĕ нумай

Килти выльăх вилсен мĕн тăвать-ха ял çынни? Е пĕр-пĕр тарăн çырма тĕпне кайса пăрахать, е çĕр айне чавса чикет, çапла-и?

Вилнĕ выльăх юлашкийĕсем çĕрме тытăнни чир пуçарас хăрушлăх кăларса тăратнине кашнинех ăнланмалла пек. Анчах та выльăх-чĕрлĕхе пуснă хыççăн вĕсен шăммине, пуçне, урине, пыршин ăш-чиккине, тирне ферма территорийĕнче е çырма-шăтăкра, е вăрманта пăрахса хăварнă тĕслĕх сахал мар.

Раççей ял хуçалăх надзорĕн республикăри управленийĕн инспекторĕсем Елчĕкри пĕр хуçалăхăн ферма территорийĕнче сысна виллисене усă вырăнта асăрханă. Кунашкал йĕркесĕрлĕхшĕн ял хуçалăх предприятине 3 пин тенкĕлĕх штрафланă.

Сăмах май, халĕ çакăншăн 20 пинрен пуçласа 40 пин тенкĕ таран штраф тўлеме тивĕççĕ. Асăннă хуçалăхра инспекторсем çулталăк пуçламăшĕнче пулнă, штрафсен виçи вара çурла уйăхĕнчен пуçласа палăрмаллах ўсрĕ. Çакăншăн предпринимательсенчен – 40-50, юридици сăпатĕнчи çынсенчен – 500-700 пин тенкĕ таранах штраф шыраса илме пултараççĕ.

Патăрьел районĕнче Пăлапуç Пашьел салинчен 2 çухрăмра вырнаçнă вăрманта био-юлашкисен /кунта чĕр чунсен тата кайăксен виллисене, вилĕ çуралнисене, ветеринари конфискачĕсене тата ыттине кĕртеççĕ/ купине тупса палăртнă. Майракаллă шултра выльăхăн çĕрме тытăннă пуçĕсем, шăммисем йăваланса выртнă. Инфекци чирĕсене палăртма пробăсем илнĕ паллах. Телее, уйрăмах хăрушă амак паллисем пулман. Районти ветстанции ĕçченĕсем купана утилизацилесси енĕпе мероприятисем йĕркеленĕ. Хуçине тупса палăртайманнине пула никама та явап тыттарма май килмен..

Био-юлашкисене ятарлă машинăсемпе Çĕрпўри ветсанутильзавода илсе кайнă. Палăртмалла, çак завод республикăра выльăх юлашкисене утилизацилекен пĕртен-пĕр завод. Вăл 1978 çултанпа ĕçлет. Унччен выльăх виллисене ятарлă вырăнсенче /выльăх масарĕ е биошăтăксенче/ утилизациленĕ. Чăваш Республикинче 830 выльăх масарĕ шутланса тăрать, вĕсенчен 398-шĕнче Çĕпĕр язвипе чирленĕ выльăха пытарнă. Асăрхăр, вĕсем пурте хупă, унта пытарма кăна мар, хăть мĕнле çĕр ĕçĕ те пурнăçлама юрамасть. Кĕтў çўретме чарнине те манар мар.

Завод вара чĕр чунсем мĕнле сăлтавпа вилнине пăхса тăмасăр виллисене йышăнать. Çавăнпа та вĕсене тирпейленĕ тата утилизациленĕ чухне Ветеринарипе санитари правилисене питĕ çирĕп пăхăнмалла. Анчах та инспекторсем валли хивререх калаçма унта та сăлтавсем тупăннă.

Кĕмелли вырăнтанах пуçлар: дезбарьерсем пур, анчах та унти дезинфекци шĕвекне улăштарман. Сивĕтмĕш пўлĕмĕ туллин ĕçлеймест. Унта вара тирпейлемен чĕр тавара дезинфекци умĕн вырнаçтараççĕ. Сиенсĕрлетмен чĕр тавара сиенсĕрлетнĕ хатĕр продукципе уйрăм тытма условисем çук. Заводăн "ăнăçсăр зони" текен вырăн санитари йĕркипе килĕшсе тăмасть, тирпейлемен шăмăсене усă çĕртех выртарнă.

Производство корпусĕнчи "ăнăçсăр пўлĕм" текен вырăн та ветеринарипе санитари тĕлĕшĕнчен лару-тăру кăткăс, дезинфекцие кирлĕ шайра туман.

Ку таранччен заводра юсав ĕçĕсем иртнĕрменни куçа тăрăннине пĕлтерет управленин пай пуçлăхĕ Надежда Емельянова. Тепĕр хапха кирли те паллă, мĕншĕн тесен тин илсе килекен чĕр тавар та, сиенсĕрлетнĕ хатĕр продукци те пĕр алăк урлах тухать.

Завода паянхи кунпа килĕшсе тăракан техникăпа тивĕçтерес ыйту çивĕччи те куç кĕрет.

Республикăшăн завод ветеринари пысăк пĕлтерĕшлĕ объекчĕ пулнă май асăннă çитменлĕхсене пĕтерме укçа-тенкĕ уйăрасса шаннине палăртаççĕ ветеринари специалисчĕсем. Республикăра 2013-2020 çулсенче ял хуçалăхне аталантарасси пирки калакан программăна «Чăваш Республикинче ветеринарие аталантарасси» текен çумпрограмма кĕртнĕ. Унта вара бюджет ветеринари учрежденийĕсен пурлăхпа техника базине тĕревлетессипе, Чăваш Республикин патшалăх ветеринари службин учрежденийĕсене хальхи вăхăтпа килĕшсе тăракан ветеринари оборудованийĕпе пуянлатассипе çыхăннă мероприятисем пирки калани пур. Асăннă завод шăпах Патветслужбăна пăхăнса тăрать.

Надежда Анатольевна выльăхчĕрлĕх хуçисене çак самантсене асра тытма сĕнет: выльăх вилсен талăк хушшинче вырăнти ветеринари специалистне пĕлтермелле. Вăл ăна утилизацилемеллине е тĕп тумаллине палăртать. Кун пирки пĕлтерменнишĕн административлă майпа явап тыттарни пирки ан манăр.

**Надежда ВАСИЛЬЕВА, управлени ĕçченĕ.**



ЙĔРКЕЛĔХ ХУРАЛĔНЧЕ

# Интернетра ан ятлаç

Интернетра, социаллă сетьсенче, темĕн те пĕр сўтсе явакан пур. Çавăнтах тавлашса та илеççĕ, пĕрне-пĕри хăртса та тăкаççĕ. Икĕ çул каялла йышăннă çĕнĕ саккунпа килĕшўллĕн çынна усал сăмахпа кўрентернĕшĕн административлă явап тыттарассине шута хумасть хăшĕпĕри.

Пуш уйăхĕнче тетелте тема сўтсе явнă май Çĕнĕ Шупашкар çынни теприн пирки пурте курмалла усал та намăс сăмахсем çырнă. Анчах чĕре çывăхне йышăнни çакна ахаль иртерсе яман, прокуратурăна çул тытнă. Асăннă тĕслĕхпе РФ административлă правăна пăсни çинчен калакан кодексĕн 5.61 статйин 2-мĕш пайĕпе килĕшўллĕн ĕç пуçарнă. Айăплин 3 пин тенкĕ штраф тўлеме тивнĕ.

Çĕнĕ Шупашкар прокуратури çынна кўрентерекенсене айăплассипе çыхăннă ĕçсене тишкернĕ. Палăртнă тăрăх – ку тĕлĕшпе пулăшу ыйтма килекенсен йышĕ çулсеренех ўсет. 2012 çулта 12 çын тĕлĕшĕпе йышăну кăларнă, 2013 çулта – 34. Кăçал 24 административлă ĕç пуçарнă, айăплисене явап тыттарнă.

**Лиана ВАНИНА.**



**Иртсе каякан эрне Çемье, юрату тата шанчăклăх уявĕпе е кил-йыш управçисен сăвaплă Петрпа Феврони кунĕпе асра юлчĕ. Пирĕн çĕр-шывра ăна 2008 çултанпа паллă тăваççĕ.**

**2009 çултанпа ЧР Президенчĕн Указĕпе килĕшӳллĕн çемье институтне çирĕплетес енĕпе тунă тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн 50 тата ытларах çул пурăнакан тĕслĕхлĕ çемьесене «Юратупа шанчăклăхшăн» орденпа чысласси вăя кĕчĕ. Асăннă тапхăртанпа республикăри 89 мăшăр, вăл шутра 14-шĕ – кăçал, çак хисепе тивĕçрĕ. Çавăн пекех 25 тата ытларах çул пĕрле пурăнакансене «Юратупа шанчăклăхшăн» медальпе хавхалантараççĕ. 2009 çултанпа общество çак награди пурĕ 310 хуçине тупнă.**

**Çĕрпӳ районĕнчи Аялти Хыркасси ялĕнчи 55 çул пĕрле пурăнакан Владимир Степановичпа Антонина Семеновна Михайловсем те – кăçал орденпа наградăлама тăратнисен списокĕнче. Çемье çирĕплĕхĕн вăрттăнлăхне пĕлмешкĕн çула тухрăмăр.**



# Пĕр чăматан кĕнекерен пуçланнă пурнăç

## Турă маннă ялта

Владимир Степанович Патăрьел чарăнăвĕнче кĕтсе илме шантарнăччĕ. Автобусран ансанах ăна шыраса йĕри-тавралла тинкертĕм. Кĕмĕл джипран хура куçлăхлă, ковбой шĕлепки тăхăннă тĕреклĕ арçын анчĕ те ман еннелле утрĕ. Çавах-ши? Ӳсĕмне кура мар ытла «чăнкăскер» ку. Иккĕленсех ун патнелле пытăм. Çакăнтан пуçланчĕ паллашу.

«Турă маннă яла илсе каятăп сире, – автомобиле хускатрĕ хуçи. – Аялти Хыркасси пĕчĕк ял, унта пурĕ те 27 кил кăна. Хĕл каçакансем тата сахалтарах, пĕр çулхине 5-6 кил кăна пушă марччĕ. Ашшĕ-амăшĕ ватăлнă е вилнĕ хыççăн çĕрпе ачисем усă кураççĕ: кураксем пек çуркунне килеççĕ те яла, кĕркунне, пахча ĕçĕсем вĕçленсен, каяççĕ. 2010 çулччен пирĕн яла асфальт çул та килмен. Ку ĕçе пуçарас тĕллевпе Путин патне çыру çырма тиврĕ... Пĕлтĕр урама та хытă çул сартăмăр. Йăлтах хамăр вăйпа, ывăл та чылай пулăшрĕ». Çулташ правур та хастар староста пулнине тӳрех ăнланса илтĕм.

Пӳрте хăмла шăрши сарăлнă. Шупашкарти ял хуçалăх академийĕнче Владимир Степановичпа пĕрле вĕреннисем шăмат кун хăнана килмелле-мĕн, çавсене кĕтме хатĕрленеççĕ. 1961 çулта диплом илнĕскерсем сыхăнăва халĕччен упраса хăварнишĕн ăмсанмалла кăна.

## Туслăхран çуралнă юрату

Владимир Степанович та, Антонина Семеновна та пĕр ӳсĕмрисем, халĕ вĕсем – 78-та. Иккĕшĕ те Патăрьел районĕнче çуралнă, Комсомольски районĕнчи Нĕркеçре 7-мĕш класченех пĕрле вĕреннĕ, ача чухнех туслашнă. Кайран çав туйăм юратăва куçнă. «Анне мана çуратнă хыççăн виçĕ çултан çĕре кĕнĕ. Атте вăрçа кайсан эпĕ кукаçипе пурăннă, мана вăлах ӳстернĕ. Эпĕ лайăх вĕренсе, çын хушшинче хама йĕркеллĕ тытма тăрăшнă. Çавăнпах Володя мана куç хывнă-тăр. Унăн ашшĕ-амăшĕ ятлă-сумлă çынсем шутланнă. Вĕсен ывăлне качча пыма тивĕçнĕшĕн эпĕ мухтанатăп та темелле», – аса илчĕ кил ăшшине упракан.

Пилĕк çул савнисем пек çӳренĕ хыççăн, Владимир 4-мĕш курсра чухне, çамрăксем пĕрлешнĕ. Çемьеллисене направленипе аякка яман, арăмĕн тупри – тӳшекпе сысна çури. Пурнăçа çакăнтанах пуçларăмăр», – хушса хурать Владимир Степанович. 5 çултан ăна Комсомольски районĕнчи ял хуçалăх управленине куçарнă. Арăмĕ Нĕркеçри фельдшер пунктне медсестра вырнаçнă. Анчах хăнăхнă йăла-йĕркерен каллех уйрăлма тивнĕ: вăхăт нумаях та иртмен, Владимир Степановича Çĕрпӳ районĕнчи юлса пыракан «Богатырь» колхоза çĕклемешкĕн ăсатнă. «Хамран ыйтмасăр авлантарнипе танахчĕ çакă. Парти çыннисем хăйсен пурнăçĕпе пурăнайман. Вĕренсе пĕтеричченех авланнин сăлтавĕсенчен пĕри çакă та. Антонина Семеновна ку тĕлĕшпе шӳтлеме юратать. «Кăнтăр енчи чăвашсен хĕр вăрлас йăла сарăлнă. Çавăнтан хăранипе хăвăртрах качча илес терĕ мана», – шахвăртать вăл.

## «Хамран ыйтмасăр авлантарнăпа танах»

Аслă пĕлӳллĕ специалиста Тăвай районĕнчи Ленин ячĕллĕ тĕслĕх хуçалăха тĕп агрономра ĕçлеме янă, çемье Тăрмăш ялĕнче тара илнĕ çуртра пурăннă. Антонина çав вăхăтра Канашри медицина училищинче фельдшера вĕреннĕ. Анчах пурăннă тăрăхра профессийĕпе килĕшӳллĕ ĕç тупăнманран почта пуçлăхне, пионервожатăя вăхăтлăх вырнаçнă. «Ялта садик çукчĕ, ывăлăма пăхакан пулманран вĕçĕмех пĕрле илсе çӳреттĕмĕр. Пепкепе 3 çулччен ларма ирĕк паман ун чухне. Йывăр вăхăт пирĕн те чылай пулнă. Укçа-тенкĕ çитменнишĕн те, пурăнмалли хамăрăн кĕтес çуккишĕн те чылай нушаланнă. Çавăнпах тепĕр ача çуратма тăхтарăмăр... Чăматан çинче пурăннă темелле. Упăшкана кирек хăш вăхăтра та урăх çĕре куçарма пултарнă-çке», – сӳтĕлет аса илӳ çăмхи. «Пурлăхĕ те çаксем кăначчĕ: пĕр чăматан кĕнеке, арăмăн тупри – тӳшекпе сысна çури. Пурнăçа çакăнтанах пуçларăмăр», – хушса хурать Владимир Степанович. 5 çултан ăна Комсомольски районĕнчи ял хуçалăх управленине куçарнă. Арăмĕ Нĕркеçри фельдшер пунктне медсестра вырнаçнă. Анчах хăнăхнă йăла-йĕркерен каллех уйрăлма тивнĕ: вăхăт нумаях та иртмен, Владимир Степановича Çĕрпӳ районĕнчи юлса пыракан «Богатырь» колхоза çĕклемешкĕн ăсатнă. «Хамран ыйтмасăр авлантарнипе танахчĕ çакă. Парти çыннисем хăйсен пурнăçĕпе пурăнайман. Мĕн хушнă – сăмахсăрах пурнăçлама тивнĕ», – уçăмлатать хисеплĕ ватă. Антонина Семеновна валли те Аялти Хыркассинчи фельдшер пунктĕнче ĕç тупăннă. Çулталăка çитмен пепкесем вăл вăхăтра участокра 20-рен кая мар пулнă. Вĕсен йывăрăшне уйăхсерен виçсе тăнă, сывлăхне тĕрĕсленĕ... Çынна пулăшу кирлĕ чухне çĕрле тăрса чупни те пайтах пулнă. 20 çул фельдшер пункчĕн заведующийĕ, Уйкас больницин аслă медсестри пулса ĕçленĕскере халĕ те çынсем манмаççĕ. «Çăлаканăм манăн» тесе тав тăваççĕ, чир-чĕртен сывалма сĕнӳ-канаш ыйтаççĕ.

## Йăхран куçнă туртăм

Владимир Степановичăн ял хуçалăхĕ вăйлă аталаннă çулсенче Çĕрпӳ районĕнчи «Правда» совхоза ертсе пыма тӳр килнĕ. Патшалăх шкулсемпе социаллă ытти учреждени, ферма, çĕнĕ урампа поселок çĕклемешкĕн укçа шеллемен саманара вăл хăй те хăпартланса ĕçленĕ. Кирек ăçта пурăнсан та, ĕçлесен те сад ӳстернĕ, вăрман ĕрчетме тăрăшнă. Çулталăкра 15-20 гектар йывăç лартса хăварса çĕр эрозийĕпе кĕрешнĕ. Пулăхлă мар çĕр çинче тухăçлă тыр-пул туса илме пултарнă Владимир Степанович. Çак пултарулăх ăруран ăрăва юнпа куçнă. «Хресчен ĕçĕ этеме çут çанталăка юратма, тĕллев патне çирĕппĕн ăнтăлма вĕрентет», – тесе çирĕплетеççĕ Михайловсем. Ашшĕ Степан Михайлович – Чăваш АССРĕн тава тивĕçлĕ агрономĕ. Вăл колхоз йĕркелес ĕçсене хастар хутшăннă, ĕмĕр тăршшĕпех çĕр çинче тар тăкнă. Владимир Степанович – ЧР тава тивĕçлĕ агрономĕ. Унăн ывăлĕ Юрий фермер хуçалăхĕ йĕркеленĕ, халĕ вăл пысăк предприяти пуçлăхĕ. Юрий Владимирович та – ЧР тава тивĕçлĕ строителĕ. Унăн ывăлĕсем те ашшĕн çулне суйланă.

## Çул хĕрринчи шăнăр куракĕ

«Аякран килнĕ çынсене вырăнтисем кăмăлламастчĕç. Пĕрре мар сиснĕ çакна. Кĕпертен ывăтма та, хĕнеме те тăнă мана. Анчах эпĕ хăраканни мар, кирлĕ пулсан «тăн кĕртме» те пултарнă. Çамрăк чухне бокспа кăсăкланнă-çке. Хама çул хĕрринче ӳсекен шăнăр куракĕпе танлаштаратăп – таптасан та çӳлеллех кармашатăп», – пурнăç çинчен юхрĕ сăмах.

Тивĕçлĕ канăва тухнă хыççăн та вĕсем чун киленĕвне çĕр ĕçĕнче тупнă. 3 гектар пай çĕр çинче тĕрлĕ сорт пахча çимĕç ӳстернĕ. Антонина Степановна та медикран агронома çавраннă. Ял хуçалăхĕ саланнă хыççăн ĕçсĕр халăх Михайловсен уйне çӳренĕ. Хуçасем вĕсене укçа тӳленĕ, кăнтăр апачĕ çитернĕ, анкартинчи çĕр ĕçĕсене хăйсен техникипе пурнăçлама пулăшнă.

# Ирĕклĕхсĕрте...

**Йĕплĕ пралук леш енче хамăн пурнăçăмра пĕрремĕш хут пулса куртăм... Йывăр та пысăк тимĕр решеткеллĕ алăкĕ шартлатса, чуна кисретсе уçăлчĕ. Чĕрене çуракан, нихăçан манса каймалла мар хăрушă сасă.**



## Хитре пурнăç илĕртмест

Федерацин айăплава пурнăçлакан службин Чăваш Республикинчи управленийĕн юсанмалли 5-мĕш колонийĕ Куславкка хулинче вырнаçнă. Пире воспитани енĕпе ĕçлекен уйрăм пуçлăхĕ Любовь Майорова подполковник кĕтсе илчĕ. Вăл кунта 27 çул ĕçлет. Любовь Валентиновна чи малтан колонири хĕрарăмсен ĕçĕхĕлĕ çинчен каласа кăтартрĕ.

Халхи вăхăтра кунта – айăпланнă 640 хĕрарăм. Чи ватти – 79 çулта. Ăна çын вĕлернĕшĕн ирĕкрен хăтарнă.

Çырма-вулама пĕлменнисем те пуррине шута илсе ултă çул каялла вĕренмеллин валли ятарлă класс уçнă. Колоние учитель килсе çӳрет. 7-мĕш класа куçнăскерсем халĕ компьютер та лайăх пĕлеççĕ. Патшалăхăн пĕрлехи экзаменне тытса ирĕке аттестатпа тухакансем те пур. Сăмахран, иртнĕ çул шкулти çирĕп йĕркепех ППЭне Улатăрта тыттарнă. 11 класс пĕтерекенсем колонирен ятарлă специальноçпе тухаççĕ. Повар, çĕвĕç, сварщик, çурт купалакан тата ытти те. Колонире çавăн пекех аслă пĕлӳ илме те май пур.

– Шел те, пирĕн патран тухсан çĕнĕ, хитре пурнăç патне туртăнмаççĕ, ăçтан килнĕ çав вырăнах таврăнаççĕ, – терĕ Любовь Майорова.

Кунта ĕçсĕр ларакан пĕр çын та çук. Ытларахăшĕ çĕвĕ цехĕнче тăрăшать, ятарлă тум çĕлет.

Республикипе илес пулсан, колонисен пĕтĕмĕшле продукци тупăшĕ 600 миллион тенкĕрен те иртет. Тавар пахалăхĕ те начар мар. Пушарнăйсем валли хатĕрленĕ тумтир 70 процент вĕри чăтать. Ăна Мускава та илсе каяççĕ. Юлашки вăхăтра çак тум яппунсене те кăсăклантарма тытăннă.

## Общежитире

Чи малтан хĕрарăмсен пурăнмалли условипе паллашас терĕмĕр. Виççĕмĕш хута йĕркене пачах та пăсманнисене, хăйсене лайăх енчен кăтартакансене çеç вырнаçтараççĕ. Пĕр пӳлĕмре иккĕн, тăваттăн, хăшĕ-пĕринче çиччĕн те пурăнаççĕ. Сеткăлла тимĕр кравать çинче – матрас, утиял, минтер тата шап-шурă вырăн тавраш. Туалет, çăвăнмалли пӳлĕм те коридорта. Воспитани ĕçĕхĕлĕн пӳлĕмне телевизор вырнаçтарнă. Ку пӳлĕмре отряд пурнăçĕпе, психолог кĕтесĕпе паллашма май пур.

## Столовăйра

Меню та кăсăклантарчĕ. Ирхине – сĕтпе пĕçернĕ сĕлĕ пăтти, чей, сахăр, çăкăр. Кăнтăрла – çупа пĕçернĕ урпа пăтти, чей, сахăр, çăкăр. Каçхине – пăшăхланă купăста, пĕçернĕ пулă /путассу е сельдь/, чей, сахăр, çăкăр. Диабетпа чирлисен – уйрăм меню. Столовăйри кашни сĕтел çинче пысăк тирĕкпе туптулли тăвар ларать. «Сĕтел çинче тăвар яланах пулмалла», – тесе хуравларĕç мана, çакăн сăлтавĕпе кăсăклансан. Каçхи апат валли темиçе кастрюль путассу пĕçерсе лартнăччĕ. Столовăйрах – пекарня. Ырă та тутлă шăршă урамранах



«Кĕркунне пахча çимĕç йӳнĕ. Кишĕре, сăмахран, килограмне 50 пуспа йышăнатчĕç, Тутарстана çити КАМаз темиçе прицепĕпе ăсататтăмăр. Вăл вăхăтра ывăлăмăр Юра хайĕн ĕçне çавăрса янăччĕ ĕнтĕ, техникăпа вăл пулăшрĕ. Çапла хамăр туса илнĕ пахча çимĕçе сутса Шупашкарта икĕ пӳлĕмлĕ хваттер туянтăмăр. Унта виçĕ уйăх пурăнса пăхрăмăр. Хула пурнăçĕ – пире валли мар. Ял пĕчĕк пулсан та питĕ килĕшет, шăплăх хуçаланать кунта. Хваттере мăнука туйра парнелерĕмĕр», – каласа кăтартаççĕ Михайловсем.

## Пĕрре килетпĕр çĕр çине

«Çемье çирĕплĕхĕ мĕнре?» – пĕлес килчĕ пирĕн. «Пĕрремĕшĕ – пĕр-пĕрне касарма пĕлни, пулнă-иртнĕ япăх самантсене манни, çавсемпе кӳлешсе чылай вăхăт чĕмсĕр çӳремени. Иккĕмĕшĕ – атте-аннене хурлантарасран питĕ хăрана эпир, çавăнпах ял-йыш умĕнче ята яман. Сăмахран, медик пулнă май, хам тăрлавсăр тăк çынран тирпейлĕхе епле ыйтăттăм? Виççĕмĕшĕ – ачасемпе мăнуксене хăвăн тĕслĕхӳпе воспитани пани», – уçăмлатрĕ Антонина Семеновна.

Унтан пахчана тухрăмăр. Агрономсен пахчи тĕлĕнмелле пуян. Мĕн тĕрлĕ тĕм çук-ши кунта: персик, абрикос, иçĕм, улмуççи, груша... Теплицăра помидор та пиçнĕ, йăран тулли хăяр, пăрăç... Çĕр ĕçне юратакансен алли çăмăл çав – йăлтах ăнса пулать. Хĕрарăм чечек кăмăллать, вĕсене тăрăшса пăхни сисĕнет. Хӳме, чаплă мунча куçа илĕртеççĕ. Уйри çĕр те пушă выртмасть Михайловсен, унта халĕ те пахча çимĕç, утă сутмалăх та туса илеççĕ. 80-на çывхараканскерсем анкартинчи, кил-тĕрĕшри ĕçсене йăлтах пĕрле пурнăçлаççĕ, ывăлĕпе кинĕ, мăнукĕсемпе мăшăрĕсем, вĕсен тĕпренчĕкĕсем çак кил-çурта çăтмах вырăнпа танлаштараççĕ, ватăсем унта – турă вырăннех. Ку килте яланах шӳтлени-кулни, ачапăча хаваслă сасси илтĕнет. Чăнах та, çын ĕçлеме кăна мар, пурăнма килет çĕр çине. Вăл вара кашнин – пĕрре.

**Алина ИЗМАН.**
Автор сăн ӳкерчĕкĕ.

ХӲТЛĔХ

# «Тухса кайиччен кил хапхине сăрласа хăвартăм»

**Украинăри хурлăхлă пулăмсем хыççăн Чăваш Ене хӳтлĕх шыраса килнĕ çемьепе паллашма тӳр килчĕ. Çĕртмен 26-мĕшĕнче Михаил Вазянов ывăлĕн çемйипе тата хĕрĕпе Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Мăн Этмене килнĕ. Вĕсемпе Шупашкарта тĕл пултăмăр: ют çĕр-шыв граждансем ФМСăн Чăваш Енри управленине вăхăтлăх регистраци илмешкĕн ыйту çырма килнĕччĕ.**



## Вăрçăран тарса

Михайло – паспортра украинла унăн ятне çапла çырса хунă – Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Уйпуçра /ĕлĕк Мăн Этмен çак ял канашне кĕнĕрен çапла çырнă/ çуралнă. Саккăрмĕш класс хыççăнах, 1971 çулта, çуралнă тăрăхпа сыв пуллашăскер чăвашла маннă ĕнтĕ, хăш-пĕр сăмаха çеç ăнланать. Украинăри Луганск облаçĕнчи Червонопартизанск хули Михаил Вазяновшăн пĕчĕк тăван çĕр-шыва çавраннă. Кунта унăн пурнăçĕ иртнĕ темелле: Украина пикине качча илсе икĕ ача ӳстерне, кил-çурт çавăрнă, Хĕрлĕ Партизан шахтинче электрослесарьте ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухнă вăл. Михаил Порфирьевичăн мăшăрĕ 2005 çулта чирлесе вилнĕ, ывăлĕн Вадимăн çемйи 63-мĕш шахта поселокĕнче тĕпленнĕ. Хĕрĕ Надя, кулинари училищине пĕтернĕскер, ашшĕпе тĕп килте юлнă.

«Манпа пĕр ӳсĕмри шахтерсем ку тĕнчерен уйрălма та ĕлкĕрчĕç... Сывлăха шахтăра пĕтертĕм пулин те пенси пысăк мар манăн. Ĕмĕр тăршшĕпех пĕрчĕн-пĕрчĕн мул пухса пӳрт лартрăмăр, хуралтăсем çĕклерĕмĕр. Йăлтах туса çитернĕччĕ ĕнтĕ. Хамăран пахча та пур, унта халĕ çимĕç пиçме тытăнчĕ: хăяр-помидор, иçĕм, персик, мăйăр... – мĕн кăна çук?» – каласа кăтартать Михаил Порфирьевич. Килтен каяс та темен вăл, йăлтах йĕркеленессе шаннă. Çавăнпах кил хапхине те сăрласа çĕнетнĕ, анчах тепĕр виçĕ кунтанах çула тухма тивнĕ. Вăрçă шăв-шавĕ кунран кун çывăхланнă, Михайло ĕçленĕ шахтăна та снаряд аркатса пĕтернĕ... Çывăхри поселока сирпĕтнĕ, перкелешӳ сасси çĕрле те ыйха татнă. Ачисемпе мăнукĕсем йăлăннипе тек тăхтаса тăман.

## Мăн Этменте

Чăваш Енре Вазяновсен хурăнташ йышлă. Михаилăн виçĕ çывăх тăванĕ пурăнать, вĕсен ачисем те кунтах тымар янă. Украинăри инкек вăхăтĕнче йăхташĕсем патне шăнкăравласах тăнă, тăван тăрăхра хӳтлĕх сĕннĕ. Мăн Этменте Михаилăн йăмăкĕн хĕрĕ Галина Крупинова пĕччене пурăнать, вăл та аякри тăванĕсене хапăлланă. Вазяновсен тĕп килĕ çывăхрах вырнаçнă. Амăшĕ вилнĕ хыççăн çурт хупăннă. Галя ăна пăхкаласа тăнă-ха, анчах хуçасăр çурт хăвăрт юхăнать çав. «Çав пӳрте çĕкленине ас тăватăп, эпĕ ун чухне шкул ачиччĕ, – аса илчĕ Михаил Порфирьевич. – Ялта çурта питĕрсе çӳрес йăла çукчĕ. Çын пурлăхне тĕкĕнмен ун чухне. Тĕп кил халĕ те çăрасăрах тăнă пирĕн. Анчах самани паян ĕлĕкхи мар ĕнтĕ. Ямăтти тӳрех «ураланать». Çутă пралукне те, счетчика та килтен тăпăлтарса кайнă, ĕçкĕçсем «улах» вырăна кăмăлланă-мĕн».

Çутăсăр пӳрте пырса кĕнĕ Украинăран тарса килнĕскерсем. Çапах та Галина тараватлăхĕ вĕсен чунне ăшăтнă. Ялта çерçи выçă вилмест теççĕ, вылăх-чĕрлĕх тытаканскер хăйĕн патне чĕннĕ. Çапла икĕ çĕрлĕ пурăнать халĕ çемье: апат пĕçерме Галя патне каяççĕ, сывăрма – тĕп киле.

Пропискăна тăратас тата ытти ыйтăва уçăмлатма Мăн Этмен ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Татьяна Артемьева, ФМСăн Чăваш Енри управленийĕн ĕçченĕсем сĕнӳсем панă. Ĕçе вырнаçтарассипе те пулăшма шантарнă вырăнти ертӳлĕх. Михаилăн хĕрĕ Надя, кинĕ Наташа Хĕрлĕ Чутайри çĕвĕ фабрикинче 3 кун стажировка тухнă. «Çĕвĕçĕ специальноçĕ çук пирĕн. Нуша тем тума та вĕрентет... Пире ĕçе илме шантарчĕç», – каласа кăтартаççĕ вĕсем.

Вадимпа Наташăн ывăлĕпе 9-ти Максимпа калаçрăмăр. 4-мĕш класа 63-мĕш шахта поселокĕнчи хăй вĕреннĕ шкулах каясшăн вăл. «Туссемшĕн пăшăрханатăп, вĕсем унтах юлчĕç», – пытармасть арçын ача. Унăн ĕмĕчĕ пурнăçа кĕрĕ-ши? Хăй халăхне хурлăх кăтартакан влаçа шанма пуçлĕ-ши, тăван тăрăха каялла таврăнĕ-ши халăх?

*Утă уйăхĕн 4-мĕшĕ тĕлне Украинăран килнĕ 49 çемье /пурĕ 75 çын, вĕсенчен 17-шĕ – ачасем/ ФМСăн Чăваш Енри управленийĕнче кунта вăхăтлăх пурăнма ыйту çырнă. Ют çĕр-шыв гражданĕсенчен ытларахăшĕ тăванĕсем патĕнче хӳтлĕх тупнă. Медицина учрежденийĕсем йывăр лару-тăрăва лекнисене тӳлевсĕрех йышăнаççĕ. Çĕртмен 30-мĕшĕнчен пуçласа утă уйăхĕн 4-мĕшĕччен Украинăран килнĕ çемьесенче икĕ ача çуралнă: пĕри Шупашкарти перинаталь центрĕнче, тепри Улатăр районĕн тĕп больницинче. Украина 4 хĕрарăмĕ ача кĕтет.*

*Чăваш Енри 83 çын тарса килнисем валли вăхăтлăх пурăнма кĕтес уйăрма кăмăл тунă, 13 çемье çак пулăшупа усă курнă. Тата тепĕр 250 çын пирĕн республикăна килесси çинчен пĕлтернĕ, хальлĕхе вĕсем Ростов облаçĕнче.*

*Чăваш Енре харăсах 3 ыр кăмăллăх фончĕ, вăл шутра Республикăри хĕрарăмсен канашĕ те, Украина граждансене пулăшмашкăн укçа-тенкĕ пухма хутшăнать. Пулăшу сĕнекенсем валли «хĕрӳ лини» ĕçлет. Унăн номерĕ – 8/8352/51-27-80.*

**Алина ТИМОФЕЕВА.**
Автор сăн ӳкерчĕкĕ.

# ЙĔПЛĔ ПРАЛУК ЛЕШ ЕНЧЕ

сăмсана кăтăклать. Çăкăр пĕçерекен Гальăна 111-мĕш статьяпа /сынна йывăр суран кӳнĕшĕн/ айăпланă. Ăна 11 çуллăха ирĕкрен хăтарнă, кайран вăхăтне пăртак чакарнă. Хĕрарăм – Белгород облаçĕнчен. «Çăкăр пĕçерме килĕшет. Эпĕ пекарньăра ултă çул ĕçлетĕп ĕнтĕ, килнĕ кунранах. Малтан пĕртте чустапа аппаланса курман», – терĕ кăмака умĕнче ăшталанакан. Вĕрие те хăнăхса çитнĕ вăл. Кунне 144 хура тата 192 шурă çăкăр кирлĕ-мĕн.

## Шур чечеклĕ уяв

Утă уйăхĕн 8-мĕшĕнче иртекен Çемьепе юрату тата шанчăклăх кунне колоние пиллĕкмĕш çул паллă тăваççĕ. Чылайăшĕн амăшĕ, ачисем, тăванĕ килнĕ. Çак уява кунта ларакансем çулталăк кĕтнĕ. Программăра – хитре ташă-юрă, хăйсем çырнă сăвăсем... Пачăшкă та пулчĕ, пурне те пил парса çăмăллăх сунчĕ.

Савакансем, юратакансем, мăшăрсем çак кун пĕр-пĕрне салтак тӳми парнелеççĕ. Сцена çинче – хиртен татса килнĕ темиçе карçинкка сарă куçлă шур чечек. Петрпа Февронин ролĕнчи хĕрсем залра ларакан хăнасене, çав шутрах пире те, юрату чечекĕ айне турĕç.

## Чистай хĕрĕ

Унпа концерт пуçланас умĕн сцена хыçĕнче паллашма май пулчĕ. Тутарстан хĕрĕ Маша Николаева кунта тăватă çул ларать. Тата çулталăк юлнă. Ăна 159 статьяпа /улталанăшăн/ айăпланă. Вăл 29 çулта. Мăшăрĕпе юратсах пĕрлешнĕ Маша. Çамрăкках пархатарлă та сăвапла ĕç те тунă хăйĕн пурнăçĕнче. Ăнсăртран курнă ачана шелленипе усрава илнĕ. Амăшĕ шăпăрлана çул çинчи водителе 50 тенкĕлĕх сутса янă-мĕн. Арçын хайхискерне ача çуртне леçнĕ. 13 çулти Никита халь Суворов училищинче вĕренет, Машăн ашшĕ-амăшĕпе пурăнать. Упăшкипе çуратнă ывăлĕ Прохор çитес çул пĕрремĕш класа каять. Ачине шкула яма ĕлкĕрес шухăшпа пурăнать Маша. Ăна çитес çулхи авăн уйăхĕн 7-мĕшĕнче ирĕке кăлармалла. Ачине пĕрремĕш класа ăсатма кăшт маларах яма та пултараççĕ. Вăл ахаль те çăмăллатнă условире пурăнать.

Маша каланă тăрăх, мăшăрĕ ишеми чирĕпе, пуçа юн кайнипе аптрама тытăнать. Ăна операци тума самаях укçа-тенкĕ кирлĕ пулнă. Хĕрарăм кивçен нумай илет, кайран тӳлеймест. Операци хыççăн сывалнă упăшки пулăшас вырăнне: «Эсĕ илнĕ, хăвах тӳлесе тат», – тет те пăрахса каять. Колоние мăшăрĕ пачах та пырса курман.

Кунта çакланиччен Маша Чистайри патшалăх çурт-йĕр фончĕнче ĕçленĕ. Хусанти аслă шкултан хĕрлĕ диплома вĕренсе тухнă, юрист специальноçне алла илнĕ. Кайран тепĕр аслă пĕлӳллĕ, экономист дипломĕллĕ, пулса тăнă.

– Фабрикăра ĕçлеме тытăнсанах çĕлеме пĕлместĕмччĕ, ик куçăмран куççуль шăпăртатса тăкăнса кӳлленчĕке çавăрнатчĕ. Пĕр уйăхран нормăна çăмăллăнах тултарма тытăнтăм, – тет.

Столовăйĕнче сĕтел хатĕрлеме те Машăна шанаççĕ. Вăл колони чиркĕвне çӳрет, нумай кĕлĕ пĕлет. Çывăх çыннисемпе, тăванĕсемпе виçшер кунлăх тĕл пулусем йĕркелесе параççĕ ăна. Ун чухне вĕсемпе ятарлă çуртра пурăнать. «Нимех те шеллеместĕп. Кадет шкулĕнче усрав ывăл Никита тупа тунине тата Прохор ăнланса, лайăх калаçма вĕреннине кăна кураймарăм», – терĕ те Маша, чунĕ хуçăлнипе йĕрсе ячĕ.



Уявра Февронисăнарне шăпах вăл калăпларĕ. Унăн та пурнăçĕ легендăри пекех. Вăл та упăшкине йывăр чиртен сыватма пулăшнă. Анчах та кайран пĕр-пĕрне Петрпа Февронии пек юратса пурăнас вырăнне шăпи урăхларах çавранса тухнă.

Колониреn тухатпăр. Решеткеллĕ тимĕр алăк каллех шалтлатса уçăлчĕ. Картиш... Эпĕ ирĕкре. Кунта хĕвел те ăшă та çутăрах, тӳпе те шупка кăвакрах. Кăкăр тулли сывларăмăр ирĕк сывлăша...

**Елена АТАМАНОВА.**
Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.



АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР

## Пулăпа ҫĕр улми



**1 горбуша, 3 пуҫ сухан, 1 килограмм ҫĕр улми, 2 кишĕр, 200 грамм майонез, тăвар, техĕмлĕх, тип ҫу кирлĕ.**

Пулла тасатмалла, пуҫĕпе хӳрине касмалла та татăксене уйăрмалла. Ҫĕр улмине шуратса улăм пĕрчи евĕр турамалла, сухана вĕтетмелле. Кишĕре шултăран теркăламалла. Хĕррине пулă хумалла, техĕмлĕх тата тăвар сапмалла. Тип ҫу сĕрнĕ ҫатма варрине ҫĕр улми, сухан, кишĕр хумалла, тăвар сапса майонез сĕрмелле. Апата 200 градус таран хĕртнĕ духовкăра 40-50 минут пĕҫермелле.

## Ҫĕр ҫырли торчĕ

**2 стакан ҫăнăх, 250 грамм маргарин, 8 çăмарта сарри, 1,5 стакан сахăр, ҫĕҫĕ вĕҫĕпе апат соди, ăшне валли: 1 килограмм ҫĕр ҫырли, 1 стакан сахăр, 1/2 апат кашăкĕ желатин, 8 çăмарта шурри кирлĕ.**

Маргаринпа сахăра пăтратмалла, ҫăмарта сарри, ҫăнăх, апат соди хушса чуста ҫăрмалла, виҫĕ пая уйăрмалла, кашнине уйрăм пĕҫермелле. Ҫĕр ҫырлине пĕр евĕрлĕ хутăш пуличчен пăтратмалла, сахăр, шывра ирĕлтернĕ желатин, кăпăкланичченлăканă ҫăмарта шурри ямалла. Пиҫнĕ чустана ҫак хутăша сĕрмелле, ҫапла виҫĕ сий хумалла, ҫиелтен кремпа тата ҫĕр ҫырлипе илемлетмелле.

## Сийлĕ ҫĕр улми

**Пысăк 2 ҫĕр улми, 50 грамм хытă сыр, 2 помидор, тăвар, пăрăҫ, майонез кирлĕ.**

Ҫĕр улмине шуратса пĕҫермелле, хулăн ҫаврашкасемпе касмалла. Ҫатмана хумалла, кашни татăка тăварпа пăрăҫ сапмалла, майонез сĕрмелле. Ҫаврашкаласа туранă помидор татăкĕ, сыр хумалла. Духовкăра пĕҫермелле, ҫиелтен ешĕл ҫимĕҫпе илемлетмелле.

## Ҫуллахи салат

**200 грамм купăста, симĕс 1 пан улми, 1 кишĕр, пĕҫернĕ 1 хĕрлĕ кăшман, 3 шăл ыхра, 50 грамм аҫтăрхан мăйăрĕ, майонез, тăвар кирлĕ.**

Купăстана тӳмелле, тăвар сапса алăпа пăтратмалла. Пан улмине, кишĕре, хĕрлĕ кăшмана теркăламалла. Ыхрана вĕттĕн турамалла, кишĕрпе хутăштармалла. Мăйăра вĕтетмелле. Салата савăта сийсемпе хумалла: купăста – пан улми – кишĕрпе ыхра – хĕрлĕ кăшман, мăйăр. Кашни сийе майонез сĕрмелле. Тутă кĕртмешкĕн салата пĕр-икĕ сехет лартмалла.

## Тăпăрчă кукли

**250 грамм тăпăрчă, 10 апат кашăкĕ ҫăнăх, 6 апат кашăкĕ тип ҫу, 2 ҫăмарта, 4 апат кашăкĕ сахăр, 1 чей кашăкĕ ҫунтарнă апат соди, ăшне хума пан улми, шур ҫырли, сахăр кирлĕ.**

Ҫимĕҫсене хутăштарса чуста ҫăрмалла. Пĕр пĕчĕк пайне кукăль питне илемлетме хăвармалла, ыттине тип ҫу сĕрнĕ ҫатмана сармалла. Пан улмине шуратмалла, варрине кăлармалла, турамалла. Шур ҫырлипе сахăр хушса пăтратмалла, чуста ҫине сармалла. Хăварнă татăкран решетке ăсталамалла. Кукăле 180 градус таран хĕртнĕ духовкăра 40 минут пĕҫермелле.

## «Пăр татăкĕ»

**1 стакан улма-ҫырла сĕткенĕ, 1,5 стакан сахăр кирлĕ.**

Сĕткенпе сахăра лайăх хутăштармалла та хăмăрланиччен пĕҫермелле. Ҫаврака е урăх хурăмлă пĕчĕк савăтсене ярса сивĕтмелле.

ПАХЧАҪĂ КĔТЕСĔ

# Утă уйăхĕнчи сад



Утă уйăхĕнче ҫамрăк улмуҫҫисене тислĕк шывĕпе шăварсан вĕсен хунавĕсем нумай вăхăт ӳсеҫҫĕ. Анчах та кĕрхи сивĕсем пуҫланиччен хытса ĕлкĕреймеҫҫĕ, хĕлле вара шăнаҫҫĕ. Ҫапла шар кăтартас мар тесен ку вăхăтра азот им-ҫамĕпе усă курмалла мар. Нумай ҫимĕҫлĕ ватă йывăҫсене вара апатлантарни ытлашши пулмĕ. Шăрăх вăхăтра шăвармалла. Ӳсекен ҫимĕҫсемпе йывăрланнă туратсем айне тĕрев лартмалла.

Уйăх вĕҫĕнче ҫамрăк улмуҫҫине, груша йывăҫҫине сыпма вăхăт. Сĕткенĕ ытларах пултăр, хуппи лайăхрах хăпăнтăр тесе ҫав тĕмсене пĕр-икĕ кун маларах шăвараҫҫĕ.

Ҫамрăк хурлăхан, йĕплĕ хурлăхан тĕммисене ҫум курăк пусса илесрен асăрханмалла. Ҫырла тăваканнисене шыв уйрăмах нумай кирлĕ. Хăмла ҫырли лаптăкĕнче чирлĕ тĕмсем пулсан вĕсене пĕр шеллемесĕр кăлармалла.

Хурăн ҫырли лартма палăртнă ҫĕр лаптăкне минерал удобрени, ҫĕрнĕ тислĕк хываҫҫĕ, 20-25 сантиметр тарăнăш чаваҫҫĕ.

# Сăтăрҫăсем тĕлĕрмеҫҫĕ



Йывăҫ ҫумĕнче армути ӳссен пан улми хуртланмасть. Тĕмме шур тăрăллă хыт курăк /тысячелистник/, ыхра, лăсă шывĕпе пĕрĕхсен улма-ҫырла туса илмешкĕн шăна-пыйтă кансĕрлемĕ.

Йывăҫсене армути е помидорăн типĕ ҫеҫкинчен вĕретсе хатĕрленĕ шĕвекпе сирпĕтмелле, тĕмсем сывăхне кориандр лартмалла.

Хурлăханпа, йĕплĕ хурлăханпа ҫуммăн упа ҫырли /бузина/ тата помидор ӳстермелле, вара сăтăрҫăсем тапăнмĕҫ.

Хурлăхан, ҫĕр ҫырли сывăхĕнче сухан е ыхра лартма тăрăшăр.

Пахча ҫимĕҫе сăвăс, пыйтă, хăнкăла таврашĕнчен сыхламашкăн шур тăрăллă хыт курăкран, кукша пуҫ чечекĕн ҫулҫинчен /2,5 литр пуҫне – 100 грамм/ хатĕрленĕ шĕвек сапмалла.

Купăста сăтăрҫисем бархатцы, ноготки, настурци чечекĕсен шăршинчен хăраҫҫĕ.

Пăрҫа хурчĕ горчица юнашар ҫитĕннине кăмăлламасть.

Ҫĕр улми анинче хĕрен лартма тăрăшăр – тымар ҫимĕҫе хăнкăла аптăратмĕ.

Каюра нимĕҫ пăрҫи ӳсекен вырăнта ҫӳремест.

Купăста шăни сельдерей шăршинчен тарать, лĕпĕшĕ – хупах шывĕнчен, йăран хушшинчи укропран.

Суханпа юнашар кишĕр, хаяр ути /шалфей/ лартсан шăна тапăнмасть.

Ҫĕр улмине хурт шăтарасран кĕркунне анана ыраш акса хăвармалла, ҫуркунне калчана сухаламалла.

Гладиолуспа пĕрле бархатцы, ноготки, сухан, ыхра лартсан сăтăрҫăсен алхасмĕҫ, чечекĕсем илемĕпе савăнтарĕҫ.

ТĔКĔР УМĔНЧЕ

# Пылпа салтак тӳми



Салтак тӳминчен сиплĕ ӳсен-тăран ҫĕр ҫинче ҫук та пулĕ. Шур чечеке халь шăпах хĕлле валли типĕтме вăхăт. Вăл пыр ыратнине те хăвăртах иртерет. Ҫӳҫшĕн уйрăмах усăллă. Салтак тӳми шывĕпе ҫусан ҫӳҫ ҫемҫелет, йăлтăртатма пуҫлать. Типĕ 100 грамм салтак тӳмине 0,5 литр вĕри шыва ямалла, ăшă вырăнта пĕр сехет тытмалла. Тĕттĕм ҫӳҫлисен 200 грамм чечек илмелле, ҫак хутăшпа ҫӳҫе чӳхемелле.

Пыл та ҫӳҫшĕн аван: вăл ăна илем кӳрет. 30 грамм салтак тӳмине пĕр сехетлĕх 100 миллилитр вĕри шыва ярса лартмалла, унтан пĕр десерт кашăкĕ пыл ярса пăтратмалла. Таса ҫӳҫе ҫак шампуньпе йĕпетмелле. 30-40 минутран пуҫа ăшă шывпа ҫумалла. Ҫакнашкал шампуньпе эрнере 1 хут усă курни ҫителĕклĕ.

# Ҫырла вăхăчĕ



Ҫырла пиҫнĕ вăхăт – ӳте илем кӳмелли тапхăр. Хăть хăш ҫырлана та вĕттĕн тураса е сĕткенне кăларса пите сĕрме юрать.

Ҫĕр ҫырли ҫуллă ӳтшĕн лайăх – пите тасатать, ырă витĕм кӳрет.

Чие ӳте шуратать, уҫăлтарать, нӳретет. Вăл витаминпа тата усăллă ытти япалапа пуян. Пур ӳтшĕн те юрăхлă, ҫапах ҫуллишĕн уйрăмах лайăх.

Йĕплĕ хурлăхан ҫемҫетет, нӳретет, кăшт шуратать, клеткăсене ҫĕнетет. Типĕ те йĕркеллĕ ӳтшĕн юрăхлă /ҫулли валли пиҫсе ҫитейменни кирлĕ/.

Хурлăхан ҫутатать, сыватать. Ҫуллă ӳтлисен – хĕрлипе, типĕ йышшисен хурипе усă курмалла. Вăрманти ҫĕр ҫырли пур ӳтшĕн те паха – нӳретет, шуратать, витаминпа тивĕҫтерет.

Хура ҫырла ӳт ватăласлăхĕпе кĕрешет. Вăйлă антиоксидант, ирĕклĕ радикалсене пĕтерет.

СĂНАНИНЧЕН

**Утă, 13.** Куккук авăтма чарăнмасан ҫу ырă та вăрăм килет, анчах урпа пучахĕ пушă пулать. Шурă пĕлĕтсем ҫиле хирĕҫ хăпарсан – ҫумăр ҫăвĕ, ҫиле май шусан – ăшăтĕ. Сурăхсем пĕрин хыҫҫăн тепри сас пама тытăнсан – ҫумăра.

**Утă, 14.** Ҫурла уйăх хĕрлĕрех тĕспе ҫутатсан – ҫиллĕ ҫанталăк кĕтмелле, ҫурла вĕҫĕсем «мăкалсан» – вăйлă ҫумăрсем пуҫланĕҫ.

**Утă, 15.** Сарăхнă ҫулҫăсем курăнсан – кĕркунне ир ҫитĕ, хĕл хăвăрт ларĕ. Сазан шывра сиксен – ăшă та уяр ҫанталăка.

**Утă, 16.** Ăмăр умĕн йытă нумай сыварать, сахал ҫиет, ҫĕр ҫинче йăваланать, ҫĕре чавать. Вăрăм туна эшкерĕпе вĕҫсен – уяра.

**Утă, 17.** Ҫак кунхи ҫанталăк ҫурлан 11-мĕшĕнчипе пĕр килмелле. Ҫырла нумай пулсан хĕл сивĕ килĕ. Аслати чарăнмасăр авăтсан пăр ҫăвас хăрушлăх пур. Капан пĕлĕтсем – уяра. Асамат кĕперĕнче симĕс тĕс мĕн чухлĕ ытларах, ҫумăр ҫавăн пек вăйлăрах ҫăвĕ.

**Утă, 18.** Уйăх тулса ҫитнĕ чух таса та ҫутă тăк – уяра, тĕксĕм те тĕссĕр пулсан – ҫумăра. Вĕрене ҫулҫи ҫинче тумлам тухсан – икĕ-виҫĕ кунтан ҫумăр ҫăвĕ.

**Утă, 19.** Ҫак кунхи сывлăм – кайăксене, чĕр чуна кăна мар, этеме те вăй-халпа сывлăх, тĕтре вара мĕн пур ҫут ҫанталăка чĕрĕлĕх сĕткенĕ, ӳсен-тăрана сиплĕх парасса ĕненнĕ.

ПĔЛНИ ПĂСМАСТЬ

## Тарласран

- 100 грамм хыр йĕппи, 100 грамм чăрăш лăсси, 150 грамм чăрăш кăчки, 250 грамм ама хупахĕн ҫулҫине 2 литр шыва ярса 15 минут вĕретмелле. Сăрăхтармалла, шыв тултарнă ваннăна хушмалла. Шыв 30 градус пулсан аван.
- 50 грамм чăрăш тăрри, 100 грамм хыр йĕппи, 100 грамм розмарин, 250 грамм юман хуппи илмелле, 2 литр шыва ярса 10 минут вĕретмелле. Кăштах лартнă хыҫҫăн сăрăхтарса шыв тултарнă ваннăна хушмалла.

## Ура тăртансан

- Шăрăхра ура час-часах тăртанать пулсассăн каҫхине контрастлă душ айĕнче тытмалла, пĕтнĕк курăкĕпе тата тинĕс тăварĕпе ятарлă ваннăсем тумалла. Ҫывăрма выртсан ура айне минтер хурăр: ҫакă тăртаннине иртерме пулăшать.
- Кăнтăрла вара ура тăртанниченментол хушнă ятарлă аэрозольсем пулăшĕҫ.





ÇАМРĂКЛĂХ

# Яш чух — аллă



Кĕркури ĕçлекен бригада çур акинчен пуçласа кĕрхи суха вĕçлениччченех хиртен кĕмест, трактор шăв-шавĕ катаранах илтĕнсе тăрать. Ялтан питĕ аякра чухне хăшпĕр механизатор вакун-будкăрах выртса тăрать, киле те каймасть.

Смена улшăннă хыççăн Кĕркури инçе çула пăхса тăмарĕ, савнийĕ патне велосипедпа вĕçтерчĕ. Колхоз самаях пысăк, унта пурĕ тăватă ял кĕрет. Вĕсенче кашнинчех Кĕркурие килĕшекен хĕрсем пурăнаççĕ. Тăван ялти Маруçпа пуринчен ытларах вăхăта ирттерме кăмăллать яш. Ш. таврашĕнче ĕçленĕ чухне Лисукпа тĕл пулать, каçхи вăйă хыççăн хапха юпи сахал мар сыхланă унпала. У.-ра ферма хĕрĕпе Нинăпа паллашнăччĕ. В.-ра Вальăпа çăлтăрсем шутланă, пĕр чĕптĕм куç хупмасăр ирхи сменăна кайни те пайтах пулнă. Яштака пӳ-силлĕ, кăвак куçлă пикерен уйрăлас килмест каччăн. Ăш хыптармăш Маруç валли пĕрех вăхăт тупма тăрăшать Кĕркури. «Мĕншĕн килтĕн ман пата, ыттисем йышăнмарĕç-и мĕн?» – хутран-ситрен пĕçерккĕ лекетчĕ кӳршĕ хĕрĕнчен. «Сана юрататăп», – тӳрре тухма пĕлет çав каччă.

Вăхăт шăвать, Кĕркури тăватă хĕрĕпе те тăтăшах тĕл пулма пăрахмарĕ-ха. Икĕ кустăрмаллă «хурçă тусне» утланать те каçхи вăййа вĕçтерет. Купăс ăсти вăл. Хăйне ята купăсĕ те çукчĕ унăн, пĕрех калама вĕренчĕ вĕт. Кайран Тулăра туса кăларнине укçа шеллемесĕрех туянчĕ.

Кĕркури хăйпе пĕр ӳсĕмрисемпе салтака каяймарĕ – сывлăхĕ тивĕçтермерĕ. Икĕ çултан тин çар комиссийĕ витĕр тухрĕ. «Санран пĕртте уйрăлас килмест-çке... Эсĕ мана хĕсметрен кĕтсе илетĕн-и? Виçĕ çул – виçĕ уйăх мар-çке çапах та», – тилмĕрчĕ Кĕркури. Хĕр ăна уçăмлăн нимĕн те калаймарĕ. «Ватта юлсан эсĕ ман çине пăхмăн та, сан валли çамрăккисем çитĕнеççĕ-çке», – терĕ çеç.

Кĕркури Маруçа та хăйне çартан кĕтсе илме ыйтрĕ. «Юрататăн пулсан чăтăмлăх çитер. Сан тавра каччăсем явăнаççĕ, чухлатăп. Авланса арăм тума кая юлтăм ĕнтĕ», – пăшăрханчĕ пулас салтак.

Тепĕр эрнерен Кĕркури патне повестка килчĕ. Тухса кайиччен пĕр кун юлсан каччă Маруçпа шурăм пуç киличченех çӳрерĕ. Хĕр юратнă йĕкĕтне кĕтме сăмах пачĕ. Тепĕр кун Маруç Кĕркурие ăсатма çар комиссариатне кайрĕ. Валя та килĕштернĕ каччипе сыв пуллашма кӳршĕ яла пырасшăнччĕ, анчах аван марланчĕ: икĕ кун каялла кăна уйрăлнăччĕ те.

Кĕркури салтак тумне тăхăнчĕ, çар ĕçне çур çул вĕренчĕ. Кĕçĕн сержант званийĕпе ăна танк полкне çирĕплетрĕç. Трактор рулĕ умне çамрăклах ларнăскере кĕçех командир туса хучĕç. Ялти хĕрĕсем патне çыру çырсах тăчĕ салтах, лешсем те хурав вĕçтерме манмарĕç. Çырусенчен пĕринче Маруç качча кайнине пĕлчĕ. Çар хĕсметĕнчен таврăннă Çеруш хĕртен вăйпах арăм тунине тĕпĕйĕрĕпе çырса кăтартрĕ йăмăкĕ. Çапла Кĕркури тăван ялти савнине çухатрĕ. Çакăншăн ытлашши кулянмашкăн вăхăт пулмарĕ темелле. Арçын тивĕçне тăрăшса пурнăçларĕ вăл. Полигонра тĕрĕслев иртрĕ. Вĕренӳре унăн экипажĕ малти вырăна тухрĕ, спорт енĕпе те полкра чăваш каччи чи маттурриччĕ.

Лисук, Нина патне çырма та манмарĕ. Пуринчен ытларах Вальăран конверт кĕтрĕ халĕ, унăн сăмахĕсем чĕрене пăлхататчĕç. Маруç та хăйĕн шăпи çинчен чунне уçса çырнăччĕ. Урăх хыпар ямарĕ вăл.

Икĕ çул хыçа юлсан Кĕркурие отпуск пачĕç, сержант званине илнĕскер яла курма килчĕ. Лисукпа Нина качча тухса ача амăшĕ пулма ĕлкĕрнĕ ĕнтĕ – вĕсемпе курнăçаймарĕ. Валя медучилищĕре вĕренет-мĕн, ун патне Шупашкара çитрĕ салтак. Анчах хĕрĕн чылай калаçса тăма вăхăт тупăнмарĕ, «яла пырăп» тесе шантарчĕ те хăй çитеймерĕ. Маруçпа тĕл пулма май килчĕ çав-çавах. Вăл иккĕмĕш пепкине кĕтет.

Кĕркури вăхăта усăсăр ирттермерĕ, килти хуçалăхра ашшĕ-амăшне пулăшрĕ. МТСа çитрĕ, унти бухгалтерпа Катьăпа калаçрĕ. Вăл качча кайма ĕлкĕреймен-ха. Салтак тумĕллĕ яш çине чиперкке ăшшăн пăхрĕ. Тепрехинче Кĕркури ăна кинона чĕнчĕ, Катя килĕшрĕ. Вăхăта хĕрпе каччă кăмăллă ирттерчĕç, татах тĕл пулма калаçса татăлчĕç. Вунă кун питĕ хăвăрт иртсе кайрĕ. Кĕркури чаçе урăх хĕр патне çуралнă çĕнĕ туйăмпа таврăнчĕ. Ир те, каç та Катя сăнарĕ куçĕ умĕнчен каймарĕ. Вальăпа та хутшăну çĕнĕрен чĕрĕлес шанăç пурха, ун патне те çыру шăрçаласах тăчĕ салтак.

Вăхăт çитсен аслă сержанта çитнĕ Кĕркури тăван тăрăха яланлăхах таврăнчĕ. Çулталăк иртсен те Катьăпа çыхăнăва татмарĕ вăл. Çав хушăрах Вальăпа та çӳрерĕ. Кĕркурин юратăвĕ сĕвĕрĕлменччĕ-ха, çемье çавăрасси çинчен унпа сăмах хускатрĕ вăл. Анчах алла диплом илнĕ пике качча тухас вырăнне Çĕпĕре ĕçлеме тухса кайрĕ.

Ĕне фермин пуçлăхĕнче çулталăка яхăн тăрăшнă хыççăн Кĕркурие виçĕ çуллăха партшкула ячĕç. Çапла Григорий Павловичăн çемье çавăрас шухăшĕ путланчĕ, Катя унăн арăмĕ пулма хирĕç марччĕ.

Валя Çĕпĕрте мединститута вĕренме кĕчĕ, ялти савнийĕпе çыхăнăва татмарĕ вăл. Каникулта иккĕшĕ те тĕл пулăвăн пылак саманчĕпе киленчĕç. «Эсĕ мана халĕ те юрататăн-и?» – ыйтрĕ хĕр каччăран. «Манаймастăп сана, эсĕ вĕренсе пĕтерессе кĕтме те хатĕр», – хуравларĕ яш. «Тепĕр çултанах Хусана куçатăп эпĕ. Кайран пĕрлешмешкĕн те хирĕç мар», – ĕмĕтленчĕ Валя.

Григорий Павлович совхозра агроном, парторганизаци пуçлăхĕнче ĕçлеме тытăнчĕ. Пĕлĕвне ӳстерсех тăчĕ вăл, Чул хулари партин аслă шкулне вĕренме ячĕç ăна. Çулталăкран, чăнах та, Вальăпа Кĕркури хут уйăрттарсах пĕрлешрĕç. Çемье пуçне совхоз икĕ пӳлĕмлĕ хваттер панăччĕ. Анчах мăшăрăн малтанлăха ăшă йăвара киленесси пулмарĕ, вĕренекенскерсем студентсен общежитийĕнче уйрăмшар пурăнчĕç.

Тăватă çултан Кĕркури тăван районах таврăнчĕ, райком партин аслă инструкторĕн тивĕçĕ кĕтрĕ ăна кунта. Кĕркурие савнă Катя та качча кайма, икĕ ача çуратма ĕлкĕрчĕ. Тухтăр дипломне илнĕ Валя упăшкипе пĕрле райцентрта пурăнма тытăнчĕ, кунта сыватмăша ĕçе вырнаçрĕ.

Пĕррехинче Кĕркурие пуçлăх хăй патне чĕнсе илчĕ те: «Сана обкома пысăкрах должноçе сĕнес шухăш пур. Килĕшетĕн-и?» – терĕ. Парти хушнине пурнăçлама хăнăхнăскер Шупашкара тухса кайма хатĕрленчĕ. Мăшăрĕ Валентина Васильевна та упăшкинчен юлмарĕ. Пурăна-киле вăл больница тĕп тухтăрĕ таранччченех ӳсрĕ.

Килĕшӳллĕ çак мăшăр çутă тĕнчене ывăлпа хĕр парнелерĕ, ачисене ырă-сывă çитĕнтерчĕ. Халĕ Кĕркурипе Вальăн тăватă мăнук, икĕ кĕçĕн мăнук.

«Ас тăватăн-и, тырă акнă чухне хĕрсемпе йывăр михĕсем çĕклеттĕмĕр. Кунашкал çĕклемпе нушалансан ача çуратаймастăр, упăшкăрсене савăнтараймăр», – тетчĕç аслăраххисем», – ĕлĕкхине аса илсе калаçать Валентина Васильевна. «Сире хĕрхеннипех пулăшма тăрăшаттăмччĕ çав», – тет арçын, пурнăç çулне пĕрле ирттерме тӳр килнишĕн шăпана тав туса.

**Александр ВИШНЕВСКИЙ.**
Шупашкар хули.

ÇЫРУ ÇЫРТĂМ ВАСКАСА

# Калаçчăрах...

Ĕçре никампа та шӳтлесе те, шахвăртса та калаçма юраманнине тинех ăнланса илтĕм. Пĕррехинче ĕçтешĕм çула май киле леçсе хăварчĕ, тепрехинче столовăйра пĕрле апатланчĕ, сĕткен илсе пачĕ. Машинăпа ларса кайнине ăнсăртран пĕри курса юлнă иккен. Тĕрĕссипе, пытарма та тăрăшман, мĕнех пултăр-ха уншăн? Тепĕр кунне мĕн кăна илтмерĕм-ши? Киле те мар, шыва кĕме кайнă иккен эпир. Вăл мана килĕштерет-мĕн. Ĕçре ман çинчен куç та илмест имĕш. Вăрттăн тĕл пулатпăр тата. Ак тамаша, хам пĕлменнине те пĕлеççĕ. Çемçе чунлă çав эпĕ. Тепĕр чухне хăлхана пĕр сăмах лекни те маншăн тĕнче пĕтнĕпе танах. Илтсессĕнех куççуль тухиччен йĕтĕм. Куçăм шыççăннине пуçлăх курчĕ те ăшшăн калаçса чунăма лăплантарчĕ. Юрать, ăнланакансker, пурнăç тути-масине курнăскер вăл пирĕн. Хам хыçра пăшăл пăтти пĕçерекенсемпе çыхланас темерĕм. Мĕн тӳрре тухса çӳремелли пур? Тата ытларах кăна калаçма пуçлаççĕ.

Мана вара хамăн упăшкасăр пуçне никам та кирлĕ мар. Урăх никама та юратма та пултараймастăп. Çак çĕр çине эпир пĕр-пĕрин валлиех килнĕ тейĕн. Килтен эпĕ тухса кайнă-кайманах мана курасси килет унăн. Кунĕпе темиçе те шăнкăравлать. Нумай пулмасть çеç пĕрлешнĕскерсен ютти пирки шухăшлама кăмăл та, вăхăт çук. Вĕри юрату тыткăнĕнчен тухса пĕтеймен-ха эпир. Çемьере йăлтах йĕркеллĕ пирĕн. Пĕрре мар, икĕ хваттер таранах, машина та, ялта чаплă çурт та пур. Укçа-тенкĕ енчен те хĕсĕк мар.

«Кĕсри кĕçенмесĕр ăйăрĕ пымасть» теççĕ халăхра. Эпĕ вара, тин çеç ĕçе тухнăскер хăçан, ăçта «кĕçенме» ĕлкĕртĕм-ши? Халь вара никампа та калаçма та юрамасть-и? Кам та пулин килĕштернишĕн эпĕ айăплă-и? Ку тарана çитсе пуçа çухатманнине малашне тĕрĕс çулран пăрăнса кайăп-ши? Кирек мĕнле пулсан та çемьене аркатмастăпах. Калаçчăрах, теприн çумне хушчăрах. Çын çинчен хăвăртах темĕнле ят та сарма пулать иккен. Кĕвĕçекенсем, теприн пирки пĕрмай япăх шухăшлакансем çапла хăтланаççĕ. Ĕненекенни ĕненет, ун çумне тата темĕн хушса хурать.

Арçынсем хитрисене хăвăрт асăрхаççĕ, куç хываççĕ. Тепĕр тесен суккăр мар вĕт вĕсем. Кунта та ним япăххине те курмастăп. Юратмашкăн никама та чараймăн та, тепĕр тесен, хистеймĕн те...

**НАДЕЖДА.**

ЮРАТУ ÇИНЧЕН – СĂВĂЛАСА

**Петĕр ЭЙЗИН**

* * *

Никам та курмасан та
тумлам
катаранах
курать сана.

Никам та кĕтмесен те
çулçă
кăчăк туртсах
чĕнет сана.

Никам палламасан та
çил
чарăнса тăрсах
пуплет санпа.

* * *

Эсĕ мана кĕтменшĕн
çăлтăрăм айăплă,
эп мар.
Çăлтăрăма ĕненнипе
эп çитрĕм сан патна –
кĕтмен хăна пек.

Эсĕ мана кĕртменшĕн
ĕмĕтĕм айăплă,
эп мар.
Ĕмĕтĕме ĕненнипе
тăратăп умăнта –
ыйткалакан пек.

* * *

Сан куçунтан пăхас чухне
çăлтăр çине
тăратăп тинкерсе.



*Нина НИКИНА*

# Амăшĕн чунĕ

*Калав*

**/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 26-27-мĕш номерсенче/.**

Картишĕнче халăх юлмарĕ. Илемлĕ пĕр хĕрарăм, кунти кантурта ĕçлекенскер, Амăшне чĕнсе илчĕ. «Кĕтĕр, тепĕр вунă минутран ывăлăра илсе тухатпăр», – терĕ те тĕрме алăкĕнчен кĕрсе кайрĕ. Амăшĕ, çав тери хумханнăран, врач çырса панă эмеле сумкинчен васкаса кăларса хыпрĕ те ыратакан чĕрине хайĕн шухăшĕсемпе канăçсăрлантарас мар тесе лăпланма тăрăшрĕ. Ахаль мар калаççĕ хуйăхпа савăнăç пĕрлех çÿреççĕ тесе. Нумай та вăхăт иртмерĕ, тĕрме алăкĕ уçăлчĕ. Алăкран ывăлĕ тухрĕ. Йĕри-тавра пăхса илчĕ. Амăшне курчĕ, кайăк çуначĕ хушнă пек хирĕç вĕçрĕ. Вăйĕ пĕтсе килнипе Амăшĕ ывăлĕ патнелле аран-аран утрĕ. «Ывăлăм, ывăлăм!» – аран тухрĕç ун сăмаххисем. Юхса анакан куççульне те шăлма манчĕ вăл. «Аннеçĕм! Аннеçĕм! Каçар мана, каçар, сана çавăн чухлĕ хуйăх туянтарнăшăн. Нихăçан та манмăп эсĕ маншăн мĕн чухлĕ çуннине», – тесе амăшне ыталаса илсе калама пуçларĕ кăна, вĕсем патне тĕрме пуçлăхĕпе ун çумĕнче ĕçлекенни тата ывăлне шалтан илсе тухакан хĕрарăм пырса тăчĕç.

«Ну, Амăшĕ, саламлатпăр сире. Аван ывăл ÿстернĕ эсир, анчах та кунта мĕнле лекме пултарнине ăнланма пултараймастпăр. Таса, аван ачасем те çакланаççĕ иккен. Малашне ăслăрах пулăр. Каçарăр пире», – терĕç те пÿлĕме таврăнчĕç. Амăшĕн сÿрĕлнĕ куçĕнчен таса та вĕри куççуль юха-юха анчĕ, чĕри кÿтсе çитнипе чăтаймасăр ывăлне тепĕр хут ыталаса илчĕ те сасăпах йĕрсе ячĕ.

«Аннеçĕм, ан йĕр. Манăн ĕмĕтсем таса та чĕрĕ. Эпĕ нимĕн чухлĕ те улшăнман. Малалла аванах пулĕ, эпĕ текех чее тилĕ пек ултавçăсен аллине лекес çук. Пурнăçра темĕн те пулса иртет. Хăш чухне этем хăй мĕн тунине те шухăшласа илеймест. Чĕрем, аннеçĕм, таса, пăлханма кирлĕ мар маншăн. Шăпам çакăн пек пулчĕ... Ĕмĕтĕме, телейĕме тĕрмене хупса лартса татас терĕç пулĕ укçашăн çунакансем. Яланах ăс парса хавхалантарнăшăн, май пур таран пулăшнăшăн, маншăн таçта та çитсе-кĕрсе чупнăшăн, хамăн хуйăхпа мана пĕччен хăварманнишĕн пысăк тав сана, Аннеçĕм. Эпĕ çакна нихăçан та манмăп», – терĕ ывăлĕ.

Вĕсен умне çăмăл машина çитсе чарăнчĕ. Унтан вĕсен çывăх тăванĕ тухрĕ. Савăнăçлăн кăшкăрса ячĕ, Амăшĕпе ывăлне ыталаса илчĕ. Арçынсем макăрмаççĕ теççĕ. Ку пачах та тĕрĕс мар, икĕ арçын куçĕнче те куççуль йăлтăртатрĕ, ку вăл савăнăç куççулĕ пулчĕ.

Тÿпере ывăнма пĕлмен тăри юррине шăрантарчĕ. Хĕвелĕ те выляса-кулса ялкăшать. Хăйĕн ăшшипе Амăшĕпе ывăлне савăнтарать. Çуркунне! Мĕнле аван. «Атьăр, кайăпăр киле, тăван киле, унта мана пĕчĕк ывăлăм, юратнă мăшăр кĕтеççĕ», – терĕ ывăлĕ.

Çулпа пĕр хĕрарăм аллипе хăлаçланса темĕн кăшкăрса чупса килни курăнчĕ. «Ку ман кин мар-и, ывăлăм? Сан арăму-çке чупать». Хĕрарăм çитсе мăшăрне ыталаса илчĕ. Пит-куçĕ çуталса кайрĕ, мăшăрне хăйĕнчен вĕçертмесĕр ыталаса-ыталаса чуп турĕ. Унăн хуйхи, тунсăхĕ çак самантрах таçта кайса çухалчĕ. Ăна та çăмăл пулмарĕ алăри пĕчĕк ачапа: çулталăк иртрĕçке. Мĕн чухлĕ кулянмарĕ, макăрмарĕ çамрăк хĕрарăм мăшăрне çемйинчен уйăрса ним айăпсăр хупса хунăшăн. «Тĕрĕс калаççĕ вырăсла: «От тюрьмы и от сумы не зарекайся»», – тесе. Эпĕ ĕмĕрне те шухăшламанччĕ çакăнта лекетĕп тесе. Малашне çутă кунсем ытларах пулас шанăçа çухатас мар, япăххине манма тăрăшас, – терĕ те ывăлĕ тĕрме енне çаврăнса сăх-сăхрĕ. – Кунта лекме ман валли çул яланах хупăнтăр. Турă сыхлатăр мана».

Тĕрĕслĕхшĕн хăрамасăр кĕрешме çăмăлах пулмарĕ Амăшĕпе ывăлне. Укçа ыйтса çула пÿлекен сахал пулмарĕ. Анчах та ачишĕн тăрăшасси – амăшĕн чысĕ. Тĕрĕс марлăхпа кĕрешесси – темĕнле саккунран та вăйлăрах, унăн виçи те çук. Ăçта çитмерĕ-ши Амăшĕ тĕрĕслĕхе шыраса?

Пĕчĕк йыш кăмăллăн шăкăлтатса калаçса малалла утрĕ. Ĕмĕр тăршшĕпех тĕрлĕ йывăрлăхпа куçа-куçăн кĕрешме тивни, ачишĕн ирĕн-каçăн çунни хĕрарăм чĕрине хавшатса çитернине, Амăшĕ юлашки чун хавалне пухса савăнам-кулам пек тунине, паллах, никам та сисмерĕ, шухăшлама та пултараймарĕ çак самантра.

***РЕДАКЦИРЕН.** Шел, калава унăн авторĕ Нина Никина пирĕнтен яланлăхах уйрăлса кайнă хыççăн пичетлеме тиврĕ. Хаклă çыннăмăр! Чуну ĕмĕрлĕх канăç туптăр. Санăн çутă сăнару яланах пирĕн асра пулĕ.*

Урама тухсан паян Çимĕк кунĕ пулнине тÿрех ăнланса илетĕн. Хитре тумланнă хĕрсем карталанса утаççĕ. Пурçăн тутăр çыхнă, шурă кĕпе тăхăннă, çĕнĕ çăпата сырнă, хăшĕсен уринче тата атă. Хĕрсем хыççăн каччăсем утаççĕ. Вĕсем те чи лайăх тумпа, купăс кĕввипе юрă тăсаççĕ.

Ялтан тухса сăрт çине хăпарсан, уяв тумĕ тăхăннă çынсене курсан куç-пуç чарăлсах кайĕ. Аслă çулпа çынсем ялалла утаççĕ. Çамрăксем те, аллисене туя тытнă ватăсем те кунтах. Каччăсемпе хĕрсем пĕрле пухăнса савăнма, çынсене курма, хăйсем çине

Тухса кайиччен Серге атте арăмне хытарса хăварчĕ:

– Хăнасем килес пулсан хăвах пăх, мана ан кĕт.

– Юрать, – хуравларĕ пуп арăмĕ.

– Тутлă апат-çимĕç кăларса ларт хăнасен умне, хаклă эрех.

– Тупайратăп пулсан.

– Тупатăн, тупатăн, эсĕ манăн лайăхскер, – ăшшăн калаçса пачăшкă арăмне ыталама тăчĕ.

Лешĕ кăмăллăн кулса илчĕ те шÿтлесе пÿрнипе юнарĕ:

– Çылăхран хăрамастăн-и?

– Кунта нимĕнле çылăх та çук.

*Н.ИГНАТЬЕВ*

# Савик

*/«Савик» роман сыпăкĕ/*

пăхтарма, пĕр-икĕ кун тăванĕсем патĕнче хăналанма каяççĕ. Ваттисем çылăх каçарттарма васкаççĕ, çурта çутса çăтмаха лекме ĕмĕтленеççĕ.

Серге аттен кăмăлĕ аван паян. Мĕншĕн савăнас мар-ха унăн! Кунĕ лайăх, халăх чиркĕве утать. Кăçал, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, прихут укçа-тенкĕрен икĕ-виçĕ хут пуянрах пулĕ. Ара, иртнĕ çул Çимĕк кунĕ çумăр çурĕ те çынсем килтен тухмарĕç. Паян турă хăй кунне пачĕ пулинех: йывăçсем симĕс тумпа витĕнчĕç, сирень чечеке ларчĕ, ун йĕри-тавра пыл хурчĕсем вĕçсе çÿреççĕ. Кайăксем юрă шăрантараççĕ. Тÿпе янкăр, такам ятарласа кăвак тĕспе сăрланă тейĕн. Пупăн пысăк автанĕ те уяв çитнишĕн савăнать. Чăхсем хыççăн хаваслансах чупкалать. Унтан хÿме çине вĕçсе хăпарса тĕнчене янраттарса авăтать – Çимĕкпе саламлать тейĕн.

Пуп арăмĕ те савăнăçлă. Самăрскер, çăмăллăн уткаласа çÿрет. Пуп арăмĕ паянхи тупăш мĕнлерех пулассине шутлать. Вăл палăртнă тăрăх, самай пулмалла. Пĕр виçĕ пин çăмарта пухăнĕ, пилĕк çĕр аршăн пир, кĕлĕ тунинчен – çĕр тенкĕ ытларах укçа, ик çĕр тенкĕ – шыва кĕртнинчен. Ку пĕр пуп пайĕ, тияккăн мĕн чухлĕ илнине шутламасăр. Банка пĕр виç çĕр тенкĕ хума пулать. Мĕн чухлĕ пухăнĕ-ха? Пуçпа шутласа кăлараймăн.

Матăшкăн ырă шухăшĕсене чиркÿ чанĕн сасси татрĕ. Кăнтăрлахи кĕлле чĕнеççĕ.

– Илтетĕн-и? – терĕ пуп арăмĕ Серге аттене. Чан çапать, эсĕ тăхăнман та-ха.

Пуп пахчара вĕлле хурчĕсем çине пăхса савăннă.

– Часах тăхăнатăп, мана вăхăт нумай кирлĕ мар, – тĕкĕр умĕнче хĕрлĕ çÿçне турама пуçларĕ, качака сухалĕ пек сухалне якатма тытăнчĕ пуп.

Эсĕ паян хитре пан улми пекех.

– Юрать, юрать, уттарах.

Кăмăллă Серге атте килĕнчен тухса картишĕнче чÿрече еннелле çаврăнса пăхрĕ, анчах арăмĕ курăнмарĕ. Хуçалăхра ĕç сахал-им? Хапхаран тухсан пуп сарлака шлепкине тÿрлетрĕ, шурă тумтирĕ çине пăхрĕ, пуçне тайса илчĕ те чиркÿ еннелле çирĕппĕн утса кайрĕ.

Семыксола ялĕнчи чиркÿ умĕпе аслă çул иртет. Ун айккипе ĕлĕкех хурăн лартса ÿстернĕ. Ял çÿллĕ вырăнта ларать, чиркÿ аякранах курăнать. Ялта вулăс правленийĕ, хупах, шкул, темиçе лавкка пур. Кунтах вырăнти пуçлăхсем пурăнаççĕ. Вулăс старшини Орлов, уретник, çыруçă... Пуçлăхсен, лавккаçсен, хупах хуçисен пÿрчĕсем аслă çул хĕрринче, çармăс хресченĕсен пÿрчĕсем – айккинче.

Ир-ирех халăх туллиех пухăннă. Сутакансем патĕнче тăма вырăн çук. Çынсем унталла-кунталла уткалаççĕ, кăшкăрашаççĕ, кулаççĕ, майăр катса çиеççĕ, хĕвел çаврăнăш шĕкĕлчеççĕ, канфет та ĕмеççĕ. Унта та, кунта та купăс сасси илтĕнет. Кам кăна çук пулĕ! Мĕн кăна курмастăн, илтместĕн. Лашапа та, çуран та пухăннă, халăх килсех тăрать. Çак халăх çине пăхса сутăçсем те, пуп та, тиек те савăнаççĕ: çынсен кĕсйисенчи укçа вĕсен аллине кĕрет-çке.

Турра ĕненекенсем чиркĕве кĕрсе тулнă. Серге атте кăнтăрлахи кĕлле пуçларĕ. Çак вăхăтра урамра тем пулса иртрĕ. Чиркĕве васкакансем чарăнса тăрсах аслă çул еннелле çаврăнчĕç. Хĕвеле хирĕç пăхма йывăр пирки аллисемпе куçĕсене картларĕç, чĕвен те тăчĕç. Калаçма тытăнчĕç, вăйăçсем купăс калама пăрахрĕç.

**/Малалли пулать/.**

**САВĂ СĔВЕМĔ**

*Лидия ИЗЕКЕЕВА*

### Сăра ĕçме пыр

Сăра турăм, сăра турăм,
Сăра ĕçме пыр.
Сăри пулсан пулмасан та
Кăрчамийĕ пур.
Пырса çÿрĕр, тăванăмсем,
Манса ан кайăр.
Мулăм пулсан пулмасан та
Çăкăр, тăвар пур.

Яшка пиçрĕ, яшка пиçрĕ,
Яшка çиме пыр.
Какай яшки пулмасан та
Çăмах яшки пур.
Пырса çÿрĕр, тăванăмсем,
Манса ан кайăр.
Мулăм пулсан пулмасан та
Çăкăр, тăвар пур.

Мунча хутрăм, мунча хутрăм,
Мунча кĕме пыр.
Мунча ăшши пулмасан та
Милĕк шăрши пур.
Пырса çÿрĕр, тăванăсем,
Манса ан кайăр.
Мулăм пулсан пулмасан та
Çăкăр, тăвар пур.

### Телей çыранĕ

Çакăнта ман телейĕн çыранĕ,
Ман умра – ырă ĕмĕт кулли.
Ырлăхран, савнăçран
ун çыранĕ,
Кĕмĕлтен, ылтăнран вĕт
пулли.

Тыткăнлать чунăма чечек уйĕ,
Вĕсенче манăн чунăм кулли.
Сывлăш уçă, илемлĕ çут ирĕ,
Киленсе сывлап кăкăр
тулли.

Çитрĕ пулĕ атте-анне пилĕ,
Çавпа манăн кăмăл тулли.
Савнăçа пĕр савни
илсе килĕ,
Пĕр унпа савăк пурнăç çути.

### Çуралнă ял

Çуралнă ял, Хирти Ĕнел,
Шап-шурă çурт, çавра сĕтел.
Каш-каш кашлаççĕ
йăмрасем,
Тунсăхласа кĕтет тĕпел.

Пас тытнă хурăн айĕнче,
Ачалăхăм ман тĕлĕрет.
Чунри таса туйăмсене
Çак шурă хурăн çеç пĕлет.

### Каçар

Каçар шăпам, эп тунă
йăнăшсемшĕн,
Куççуль ан сапчĕ манăн
çул çине.
Каçар савни, усал, сив
сăмахсемшĕн,
Халь тавăрасчĕ иртнĕ
кунсене.

Тавах, шăпам, телейлĕ
вăхăтсемшĕн,
Савма сăмах парсаччĕ
пĕр-пĕрне.
Пин-пин çут çăлтăрлă манми
каçсемшĕн,
Чĕнетчĕç ĕмĕтсем
пулма пĕрле.

Каçар шăпам, тĕтреллĕ
туйăмсемшĕн,
Çулсем пайланчĕç пирĕн
ик енне.
Савни сăмах хушсан
хирĕç чĕнменшĕн,
Каçар, шăпам. Савниçĕм,
ан сивле...

### Ан васка

Ан васка, савниçĕм,
ан васка,
Сывă пул темешкĕн ан васка.
Санпала пуласшăн ман чĕрем,
Саншăн тапĕ ĕмĕрех, пĕлсем.

Ан васка, савниçĕм,
ан васка,
Пăрахса каймашкăн ан васка.
Сан çине тепре пăхса илем,
Кайăк пек çунатланса вĕçем.

Ан васка, савниçĕм, ан васка,
Телее пĕр шелсĕр ан ласка...

# Вĕсен туйăмĕсене уçлăх тĕрĕслене...

**Тĕнче уçлăхне парăнтарнă Гагарин çинчен паян çĕннине каламалли нимĕн те юлман пулĕ. Пĕр вăрттăнлăх çеç халĕ те чаршавпа хупланса тăрать. Ку – Юрий Алексеевичăн уйрăм пурнăçĕ. Тен, пĕрремĕш космонавтпа унăн мăшăрĕн юратăвĕ çинчен хăçан та пулин хитре фильм ÿкерĕç? Çавăн чухне тин Валентина Гагаринăн ячĕ символа – чăн-чăн юрату тата шанчăклăх паллине – çаврăнĕ...**



## Çăлтăр хула

Мускав çывăхĕнчи Çăлтăр хулара совет саманинченпе вăхăт чарăнса ларнă тейĕн. Нимĕн те улшăнман кунта. Йĕри-тавра – çÿллĕ хÿме. Шала хăпăл-хапăл кĕрсе кайма çук: çула шлагбаум пÿлет, хуралçă та кунтах. Пĕр сăмахпа, хупă территори. Кунта юттисем çÿремеççĕ...

Эпĕ те хăнана кăна килетĕп – паллă летчица Марина Попович тата Герой космонавтăн Георгий Шонинăн тăлăх арăмĕ Галина Аркадьевна чĕнчĕç мана. Вĕсем Çăлтăр хулара пурăнаççĕ. Пачах урăх тĕнчене килсе çакланнă пек туйăнать. Юмах тĕнчине. Утопи. Паркри сукмаксене шампуньпе çуса тасатнă тейĕн – йăлтăртатса кăна тăраççĕ. Таса. Çап-çутă. Пур çĕрте те тирпейлĕх хуçаланать. Уçлăхпа çыхăннă плакатсем чунра мăнаçлăх çуратаççĕ – эпир çапах та пĕрремĕш!

Хăйне евĕр ку хулара пурте пĕр пĕрне палласçĕ, сывлăх сунаççĕ. Ачисемпе, мăнукĕсемпе кăсăкланаççĕ. Ахаль кăна велосипед утланса кÿлĕ хĕррипе тепĕр арçын ачаран та правуртарах вĕçтерекен сăнавçă летчика кунта кăна курма пулать ахăр. Çур сехетлĕхе лавккана е пĕлĕшсем патне хăнана кĕнĕ май "тимĕр туса" урамрах йывăç çумне тайăнтарса хăварасси йăлана кĕнĕ ку хулара – пĕлеççĕ: пур пĕр уралнмасть. Ăçтан уралантăр-ха, кам вăрлатăр? Пурте "хăйсен" вĕт! Преступность çавăнпах – нуль процент! Кунта çула çитмен çамрăксем сăра е эрех кĕленчи çĕклесе утнине курăймăн. Усал сăнлă çын та утмасть кунта. Çул-йĕр паллисем хăвăртлăха 20 километртан ытларах ÿстерме чараççĕ. Çак йĕркене пурте пăхăнаççĕ – машинăсем майĕпен кăна çÿреççĕ. Çапах та çĕр çинчи çăтмах та йăлăхтарать-ши? Космонавтсемпе летчиксен ачисемпе мăнукĕсем мăртăхма та пăхаççĕ – пĕтĕм пурнăç çÿллĕ хÿме леш енче иртсе пырать, киле ятарлă пропускçăр кĕме çук, çĕрле вара пачах та çул хупă: шлагбаума ку вăхăтра уçмаççĕ. Çапах та иккĕленес килет – кунтан 20 километрта кăна вырнаçнă Мускава куçма сĕнсен çĕр çинчи çак ырлăх утравĕнчен пăрахса кайма тупăнакан пулмĕ.

## Мăшăрне кашни ирех курать

Мана Валентина Ивановна Гагарина пурăнакан çурта кĕтартаççĕ. Пĕрремĕш космонавт хăй кунти ырлăхпа пĕр уйăх кăна киленсе ĕлкĕрнĕ. 1968 çулччен Гагаринсем Чкаловский поселокра пурăннă. Аэродром унта пулнă. Летчиксем те унти çуртсенчех пурăннă. Нарăс уйăхĕнче çеç çемье çĕнĕ хваттере куçнă. Пуш уйăхĕн 27-мĕшĕнче вара космонавт тренировка вĕçеврен таврăнайман. Çемье пусĕ çав вăхăтра 34 çулта пулнă. Пурăннă тăк кăçалхи пуш уйăхĕнче вăл 80 тултармаллаччĕ.

Валентина Ивановна мăшăрĕн вилĕмĕ пирки нихăçан та никампа та калаçман. Савнă çынни çинчен вăл кĕнеке кăна кăларнă – "108 минут и вся моя жизнь". Ун хыççăн... шăпланнă. Паян та вăл никампа та хутшăнмасăр пурăнать.

Нумай хутлă элита шутне кĕрекен çурт. Кунти хваттерсен маччисем питĕ çÿллĕ вырнаçнă. Балконĕсем çинче велосипедна ярăнма та пулать. Тăлăх арăмăн тăваттăмĕш хутри хваттерĕн чÿречисем аллейăналла тухаççĕ, унта вара шур чечеке аллинче чăмăртакан Гагаринăн бронза палăкĕ пур. Шăпа ăйăйи тейĕн çав – кашни ир тĕлĕкĕсенчен хăпса пĕтсе ура çине тăрсан тăлăх арăм чÿрече патне пырать те яланах арăмĕпе сыв пуллашса тăсталла каякан упăшкин çурăмне курать. Тепĕр тесен, мĕншĕн тăсталла? Хушнине пурнăçлама. Унтан вăл текех таврăнаймĕ.

Çамрăках мар хĕрарăм хĕлле урама пит тухсах çÿремест – шуçлак çул çапах та хăратать. Тухсан та алăк умĕнчен инçе каймасть – кайăксем валли хăй аллипе ăсталаса çакнă сырăш çине апат хурать. Хĕлĕпех вара кунта уйăпсемпе кăсăясем ыр кураççĕ.

## Суя сăмах вĕлерет

– Пирĕн Валечка – пĕр çынна кăна юратма пултаракан хĕрарăм, – ăшшăн каласа кăтартать ун çинчен Юрий Гагаринăн тăванĕн ачи. Космонавтăн аслă аппăшĕн Зойăн хĕрĕ Тамара Дмитриевна уçлăх паттăрĕн тăван кĕтесĕнче Гагарин хулинче пурăнать, куккăшĕн ячĕллĕ музейра ĕçлет.

– Валя Юрăна питĕ юрататчĕ. Вăл вилнĕ хыççăн текех качча тухмарĕ. Тепĕр хут çемье çавăрмашкăн вара унăн пур май та пурччĕ. Ăна нумайăшĕ килĕштеретчĕ, мĕншĕн тесен вăл питĕ хитреччĕ: тĕмĕн пысăкăш хура куç, вăрăм çивĕт, кĕлетки – шăратса кăларнă пек. Унсăр пуçне Валя – тĕлĕнмелле маттур кил хуçи. Унăн ашшĕ шеф-повар пулнă, хăй мĕн пĕлнине хĕрне те вĕрентсе хăварнă.



Валя нумай çĕлетчĕ, çыхатчĕ. Ас тăватăп-ха, вĕсен йытă пурччĕ. Валя унăн çăмне туртатчĕ те тăçта фабрикăна леçетчĕ. Унта ăна çав çăмран çип арласа паратчĕç. Валя вĕсенчен упăшки, ачисем, тăванĕсем валли чăлха-алсиш çыхатчĕ. Вăл чаплă хăнасем хушшинче саркаланма юратмастчĕ, ытларах кил тĕрĕшри ĕçсемпе аппаланма кăмăллатчĕ. Анчах та пĕрремĕш космонавтăн мăшăрĕн статусĕ пур пĕр çын хушшине тухма хистетчĕ.

– Валентина Ивановна мăшăрĕ çинчен пĕр интервью та паманни паллă. Çакăн сăлтавĕ мĕнпе çыхăннă-ши?

– Чи малтанах, ман шухăшпа, çакă ыратупа çыхăннă-тăр. Савнă çынна ĕмĕрлĕх çухатма çапах та çăмăл мар. Каярахпа вара намăссăр 90-мĕш çулсем çитрĕç. Мĕн кăна калаçмарĕç-ши ун чухне!



Хаçатсем çав вăхăтра статьясене мĕн тесе пичетлетчĕç-ши? Гагаринпа Серегин вĕçеве ÿсĕр пуçпа тухнă-мĕн, çавна пула инкеке çакланнă та. Кун пек таса мар информаци мĕн чухлĕ тăкăнчĕ-тĕр пирĕн пуç çине...

Хăвăрах шухăшласа пăхăр-ха, пирĕн, тăванĕсен, мăшăрĕн тата Юрăна пĕлекен сынсен çакна чăтса ирттерме мĕн чухлă вăй-хăват кирлĕ пулчĕ! Юра пек таса чунлă çынсене халĕ шырасан та тупаймăн! Çак таса марлăхпа хăшĕ-пĕри, тен, кĕрешĕччĕ те, ырă ята тавăрма суда кайĕччĕ. Валя вара апла тумарĕ. Никампа та хирĕçмерĕ, тава кĕмерĕ, никама та нимĕн те ĕнентермерĕ. Тата хăй тĕнчине шаларах путрĕ кăна.

## Малалла-ха пурнăç, малалла...

– Халĕ Валентина Ивановна кампа пурăнать?

– Унăн ара йышши попугай пур. Кайăка Юра илсе килнĕччĕ, ăна вара такам парнеленĕ-мĕн. Вăл вăхăтрах попугай 30 çулта пулнă-ха. Халĕ вара вăл тахçанах 80 урлă кaçнă ĕнтĕ. Анчах та кун йышши кайăксем 150 çул таранччен пурăнма пултарнине калаççĕ. Ытларах та. Сăмси тем пысăкăш. Çакланса çур пÿрнене ним мар татса илме пултарать. Вальăна кăна нихăçан та тивмест вăл. Иккĕшĕ питĕ туслă.

Попугай унăн хулпуççийĕ çине хăпарса ларать те тем мăкăр-мăкăр туса ларать. Калаçать тейĕн. Валюша апат çиме тăрсан вара унăн çăварнех кĕрсе кайса татăк туртса кăларма та именмест. Валя кулать. Çапла пурăнаççĕ вĕсем иккĕшĕ. Хĕрĕсемпе мăнукĕсем – Мускавра. Тăтăшах пырса çÿреççĕ-ха та, анчах та вĕсен хăйсен пурнăçĕ вĕт.

Асли Лена Мускав Кремлĕн музейĕн ертÿçи. Кĕçĕнни Галя университетра вĕрентет. Мăнукĕсем Катьăпа Юра Мускав патшалăх университетĕнчен вĕренсе тухрĕç. Арçын ача халĕ аспирантурăра ăс пухать. Пуш уйăхĕнче, Юрăн çуралнă кунĕнче, пирĕн музей çуртра Гагаринсен йăхĕ пухăнаттăмăр – 30 çын таран.

Иккĕмĕш, виççĕмĕш сыпăкри тăванĕсем... Инженерсем, тухтăрсем, музыкантсем, экономистсем, çар çыннисем. Чăн та, пирĕн хушăра тек космонавт та, летчик та çук. Тен, каярахпа пулĕç вĕсем... Пурнăç малалла вĕт, çамрăк ăру ÿсет, мăнуксем, вĕсен ачисем çуралаççĕ...

## СĂМАХ МАЙ

Пире шкултах вĕрентнинчен эпир çакна пĕлетпĕр: уçлăха пĕрремĕш хут хăпарнă чĕр чунсем – СССР йыттисем Белка тата Стрелка. Вĕсем Юрий Гагарин уçлăха парăнтариччен темиçе уйăх маларах çĕр планета чиккинчен тухса курнă. Тĕрĕслĕх вара урăхларах-мĕн...

Уçлăха чĕрĕ чунсенчен чи малтан... улма-çырла ичĕ шăни хăпарнă. Вĕсене 1947 çулта V-2 ракетăпа американсем вĕçтернĕ. Икĕ çултан АПШ тÿперен те çÿлерех тата икĕ упăтене çула кăларнă. Чăн та, мăнтарăнсем каялла таврăнайман. 1951 çулта пирĕн йытăсем Дезик тата Цыган Р-1В ракетăпа уçлăха Çĕртен 110 километр çÿллĕшне улăхнă. Каялла чиперех таврăннă. Дезик чĕри уçлăхпа çыхăннă тепĕр ĕçре тапма чарăннă. Цыган вара уçлăхра пулса курнă хыççăн тата 10 çул пурăннă.

**/«Караван историй»/.**



## ☺ И-ХИ-ХИК ☺

Пĕчĕк ывăлĕ амăшне хавхалантарма шухăшланă:

– Анне, ÿссен эпĕ сана джип илсе парăп. Сана вара, атте... – шухăша каять хайхи – шăккалат: кÿренмелле ан пултăр.

* * *

Пĕчĕк хĕр пĕрчине ялта пурăнакан аслашшĕ-асламăшĕ патĕнчен хулана илсе таврăннă.

– Ах, пĕчĕкскерĕм, кил-ха, юратам, – ун енне аллине тăсать 15 çулсенчи аппăшĕ.

– Аллуна кăтарт: çурăн-и-ха? – тиркевлĕн пăхать йăмăкĕ...

* * *

Лавккара:

– Ĕнер эсир мана укçа каялла тĕрĕс мар тавăрса панă, – тет арçын ача сутуçа.

– Мĕскер эсĕ? Апла тăк санăн ĕнерех килмелле пулнă.

– Мĕнех, пин тенки хамрах юлтăр эппин...

* * *

Ювелир лавккинче:

– Калăр-ха, çав çĕрĕн хакĕ мĕн чухлĕ?

– Çĕр пин.

– Пĕтрĕмĕр! Ак кун вара?

– Икĕ хут – "пĕтрĕмĕр"!

* * *

– Капитан, мĕн пулнă сире? Тем кăмăлăр хуçăлнă пек туйăнать...

– Хуçăлмасăр... Ĕмĕр тăршшĕпех лотерея билечĕсен вылявне хутшăнатăп. Аранах выляса илтĕм – тĕп приз!

– Лайăх вĕт-ха ку!

– Камшăн лайăх пулĕ... Иккĕмĕш тата виççĕмĕш призсем – укçалла. Пĕрремĕшшĕн вара – пирĕн караппа ярăнса çÿремелли путевка...

* * *

– Мĕн сăмсуна уснă эсĕ?

– Ара, ĕнер метрора хитре пикене куртăм. Илемлĕ-ĕ, ури-и!.. Чăтаймарăм, пырса куç хĕсрĕм.

– Вăл вара?

– Тăрса хăйĕн вырăнне сĕнчĕ.

* * *

– Ало! Алиса, ку эсĕ-и? Эпĕ театра каймашкăн билет туянтăм.

– Мĕнле маттур вĕт-ха эсĕ! Апла эпĕ пуçтарăнма пуçлатăп.

– Пуçла çав, шăпах ĕлкĕретĕн: спектакль ыран пулать.

* * *

Кукша пуçлă икĕ арçын тавлашать:

– Эсĕ манран кукшарах, – тет пĕри.

– Мĕншĕн-ха? – ăнланмасть тепри. – Санăн та, манăн та пуç тăрринче пĕр çÿç пĕрчи те çук.

– Мĕншĕн тесен санăн пуçу манăннинчен пысăкрах, – парăнмасть пĕрремĕшĕ.

* * *

– Лева, эпĕ санпа пĕрлех хурланнине пĕлтеретĕп...

– Мĕн пулнă? Такам вилментĕр?

– Вилмен-ха... Манăн çĕлен ĕнер хăйне валли кĕрĕк туяннă...

– Вара? Мана мĕн ĕç пур кунта?

– Каçар, тусăм, анчах та, ыран эпир сирĕн пата хăнана пыратпăр вĕт-ха...

* * *

– Сывă-и, Леха!

– Аван-и, Серега!

– Шкултан вĕренсе тухнăранпа миçе çул иртрĕ ĕнтĕ!

– Ан та кала! Мĕн тери хăвăрт шăвать вăхăт.

– Мĕнле пурăнатăн?

– Çын пекех. Машина, хамăн водитель, мигалка...

– Мĕн, депутата тухмарăнтăр?

– Çук, "васкавлă пулăшу" фельдшерĕ эпĕ.

* * *

– Мĕн, шурă "Лексуспа" принц килессе кĕтетĕн-им?

– Çук, мĕн эсĕ? Çынни лайăх пултăр. "Лексусĕ" вара... тĕсĕ пĕлтерĕшлĕ мар...

* * *

– Качча тух мана!

– Пысăк куçлă кевĕр çĕрĕ парнелĕн-и?

– Лайăх "ăсатрăн" эсĕ мана... Инçете...

* * *

– 30 градус сивĕре сирĕн машина чиперех тапранать-и?

– Пĕлместĕп – ун чухне унăн алăкĕсем те уçăлмаççĕ.

* * *

Икĕ юлташ тĕл пулнă:

– Ачалăхри пĕр ĕмĕтÿ те пулин пурнăçланнă-и санăн? – ыйтать пĕри.

– Çапла. Атте çÿçрен туртнă чух яланах кукша пуç пирки ĕмĕтленеттĕм...

* * *

– Сирĕн машинăна вăрласа кайнă çынна палласа илме пултаратăр-и эсир? – ыйтать судья шар курнинчен.

– Унăн адвокачĕн сăмахĕ хыççăн манăн ку таранччен машина чăнласах пулни пирки те иккĕленме пуçларăм-ха...

* * *

Демократи пĕрремĕш арçынпа хĕрарăм тапхăрĕнчех пуçланнă теççĕ – Адама Ева патне çавăтса пынă та хăйне килĕшекен арăм суйлама сĕннĕ...

* * *

– Эпĕ хăйне урăххисемпе улталанине пĕлнĕ манăн арăм...

– Темех мар – вăл санăн вăйлă хĕрарăм.

– Çакă хăратать те...

* * *

Малтанхи виçĕ кун пахча çимĕçрен тунă салат кăна çимелле, унтан тăватă кун турăх кăна ĕçмелле, каярахпа пилĕк кун курăк чейĕпе кăна сăйланмалла, тепĕр эрне таса шыв кăна пулмалла рационра, вара – тăхăр кун... хĕрĕх кун...



## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРÿСЕМ

### КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 8-962-599-47-06.

**141.Коров, бычков и лошадей.** Т. 8-960-310-98-78.

**333.Бычков, тёлок, коров, свиноматок.** Т. 89370144997.

**452.ДОМ с участком** в любом состоянии. Тел. 89603008787.

**474.Дом, участок.** Т. 41-38-16.

**475.Спецтехнику.** Т. 413816.

### СУТАТĂП

**494. Вĕлле хурчĕсем.** Т. 8-961-342-90-59.

### УСЛУГИ

**51.Бурение колодцев,** скважин, кольца колодезные высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 8-937-379-00-80.

**152.Бурение скважин** на воду. Т. 89603021293.

**229.Кровля, обшивка домов.** Гарантия. Скидки. Т. 89276687574.

**250.Кровельные, фасадные работы. Монтаж** водостоков. Гарантия. Качество. Т. 89033220479.

**273.Бурение скважин на воду** до 50 м. Т. 8-906-381-60-37.

**419.Доставка керамблоков, песка, ОПГС –** от 10 до 20 тн. Т. 8-987-673-47-54.

**493.Чистка колодцев.** Т. 89373860170.

**499.Бурение скважин** на воду. Т. 89051980333, 89876740030.

### ПРОДАЮ

**4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка – бесплатно. **Т. 89875766562.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидровибропрессованные заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**7.Срубы для бани.** Т. 37-28-74.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**9.Гравмассу, песок, щебень,** керамзит, чернозём. Т. 89033583021.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. **Доставка.** Выездная сварка /генератор/. **Грузоперевозки.** Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Гравмассу, песок, щебень, керамзит,** чернозём, навоз. Дёшево. Доставка. Т.: 89276689713, 389713.

**15.Кирпич, к/блок.** Т. 89613393363.

**16.СЕТКУ-РАБИЦУ** от производ-ля: чёрную, зелёную, оцинкованную – около 100 видов; **сетку сварную,** столбы, скобы, проволоку, калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 8-937-952-22-11.

**19.Гравмассу, песок,** керамзит, **бой кирпича.** Т. 89033225766.

**20.Сетку-рабицу,** ворота, калитки, заборы; кровля, обшивка домов, **навесы.** Д-ка. Установка. Пенсионерам скидки. Т.: 89022881447, 38-75-74, **metalservis21.ru**

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.

**22.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Замер, доставка – бесплатно. Без выходных. Т.: 89176529694, 89276679588.

**23.Гравмассу, песок, бой кирпича,** щебень. Д-ка. Т. 89061355241.

**24.ГРАБЛИ, косилки, сажалки, копалки,** окучники, опрыскиватели. Доставка. Т. 89278533596.

**33.Гравмассу,** песок, **щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**35.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Высокое качество. Низкие цены. Доставка. Документы. **Т. 8-937-386-66-29.**

**48.Керамблоки, кольца** колодезные; всё для **фундамента** – ФБС, бой кирп., бетона, свая, ОПГС, песок. Д-ка. Т. 89063814420.

**53.Отруби, зерно,** к/корм, **сахар, мука.** Доставка. Т. 89373916016.

**58.Гравмассу, щебень,** песок, **керамзит,** бетон, **чернозём,** навоз. Д-ка. Недорого. Т. 89276687015.

**61.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Гарантируем высокое качество. Низкие цены. Доставка. Т. 89876734754.

**66.Заборы кованые.** Т. 89276689587.

**73.ПРОФНАСТИЛ, металлочерепицу, сайдинг, водостоки.** Скидки. Замер. Доставка. Монтаж. Т. 8-903-322-04-79.

**117.ОКНА Чувашии.** Пластиковые **окна,** железные **двери.** Замер. Монтаж. Скидки. Т. 8-905-028-11-82.

**124.Песок,** щебень, **гравмассу, керамзит,** торф, кирп. бой, **цемент.** Т.: 89033220479, 48-04-79.

**157.**Пластиковые **ОКНА,** стальные **ДВЕРИ.** Дёшево. Т. 89276689303.

**158.ОКНА, ДВЕРИ "БАРС".** Заводское производство. Бесплатный замер. Рассрочка. Гарантия 10 лет. Скидки. Т. 8-927-668-93-03.

**172.Гравмассу,** керамблок, **песок, щебень.** Д-ка. Т. 89023277585.

**178.Гравмассу, песок, цемент.** Д-ка. Т.: 8-927-849-76-75, 8-927-849-76-74.

**221.Профнастил, металлочерепицу, водостоки,** металлосайдинг. Доставка, замеры. Строительство. Т. 8-919-653-43-68.

**230.Бетон, раствор,** фундаментные **блоки.** Доставка по Чувашии. Т.: 8-937-391-86-48, 8-927-853-57-32.

**249.БРУСЧАТКУ,** плитку тротуарную, **керамзит, песок** в мешках. Замер. Доставка. Укладка. Т.: 89033220479, 8-903-358-06-79.

**316.Гравмассу,** песок, **керамзит,** щебень, бой кирпича, **навоз.** Доставка. Т. 89051974019.

**317.Гравмассу,** песок, **щебень,** керамзит, **навоз.** Дёшево. Доставка. Т. 8-927-850-28-21.

**323. Песок** карьерный, речной; **гравмассу,** щебень, **керамзит,** асфальтную крошку, бетон, раствор всех марок. Недорого. Т. 8-961-340-93-05.

**341.Гравмассу, песок, щебень.** Доставка. Т. 8-903-066-66-30.

**450.КЕРАМБЛОКИ** пропаренные, вибропрессованные – **недорого.** Доставка. Т. 8-917-677-68-46.

**472.Гравий, щебень, песок, гравмассу,** торф, перегной, чернозём, асфальтную крошку, опилки. Т.: 8-906-132-63-78, 484161, 89196526902.

### РАБОТА

**110.Монолитчики,** плотники, **монтажники,** шлифовщики, **каменщики,** сварщики. Питание, спецодежда. Вахта. Т. 8-925-002-22-38.




«ХЫПАР» Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИН "ХЫПАР" ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ" ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор – тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ

Золотой фонд прессы MMVIII | Чăваш Хĕрарăмĕ

Çырăнмалли индекс: 11515

Редактор – М.М.ИЛЬИНА

Дежурнăй редактор – Е.М.АТАМАНОВА

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев службин 2013 çулхи ака уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.

РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ

ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ: 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.

Факс: /8352/ 28-83-70, 56-20-07

Электрон почти: hypar@chtts.ru

Хаçатри рекламăсăр тÿлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшÿллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи"** рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 19 сехетре алă пуснă. Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.

Тираж 7613. Заказ 2540.